*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!* Хакĕ 25 пус.

# КАПКĂН

№ 9
[redacted] Ҫĕнтабĕр
1936 ç



— Атте! Ирхине, шкула кайас умĕн есĕ канфет илме мана укҫа патăн. Ҫав укҫашăн хĕрарăмсемпе ачасем сана тав тăвĕҫ.

— Мĕнле апла?

— Есĕ панă укҫана пĕтĕмпех епĕ Испани халăхĕн ачисемпе хĕрарăмĕсене пулăшма патăм.




Иван Петрович лăпланаймасăр кабинет тăрăх уткаласа çӳрет. Ăна халь çеç пĕр вăрттăн ĕç çинчен илтни канăç памасть. Вăл халĕ кăна пĕр ответлă заçеданирен килчĕ. Çав заçеданире Иван Петрович леш... мĕн... çинчен пĕлчĕ.

Анчах шăп çеç! Никама та çур сăмах пĕлтерме юрамасть. Вăл партиле вăрттăн йапала. Çук, Иван Петрович палкаса, пушăлла авăртса çӳрекен çын мар. Кирлĕ вăхăтра вăл шăлне çыртса тăма та пултарать. Шухăшлама кирлĕ вĕт! Леш... мĕн, тет иккен...

Унăн кабинетне хăй заместителĕ Йакур Куçмич пырса кĕрет. Ăна та çур сăмах пĕлтерме юрамасть. Никама та!

Иван Петрович хăй заместителĕ вăхăчĕ-вăхăчĕпе ытлашши нумай пĕлме тăрăшнине тахçанах пĕлет. Аван мар йапала вăл: хăвна пĕлме кирлĕ марри çинчен çине тăрса ыйтса пĕлме тăрăшни. Ыйттăрах! Иван Петрович çавах çур сăмах та калас çук.

Йакур Куçмич пукан çине ларса майĕпен кăна пирус тивертет:

— Заçеданире пултăни, Иван Петрович?

— Пултăм. Пĕр çур сехет хушши...

— Мĕн çинчен калаçаççĕ?

— Хальхи лару-тăру çинчен. Автономи урамне йусасси çинчен те калаçкаларĕç.

Иван Петровича хăйĕн помошникĕ кӳренсе тутине пăрнă пек туйăнчĕ.

— Нивушлĕ хăйĕнчен мĕн те пулин пытарса хăварнине сисрĕ-ши?—тесе шухăшласа илчĕ Иван Петрович.—Ырă мар! Анчах çапах та нимĕн те шарламастăп. Шăп кăна!

Йакур Куçмич тăрса алăк патнеле утрĕ.

— Йакур Куçмич! Акă мĕн... Сана пăртак пĕлсен те пырать. Анчах асту, питĕ вăрттăн йапала. Епĕ хам супăльтетсе, палкаса çӳреме юратмастăп. Есĕ те никак...

— Мĕн калаçмали пур!..

— Çапла! Пайан заçеданире... леш... мĕн çинчен калаçрĕç. Леш... иккен...

Иван Петрович Йакур Куçмич хăлхи патне пĕшкĕнсе заçеданире мĕн илтнине пăшăлтатса калама тытăнать.

— Акă мĕнле иккен...—тесе шухăшласа утать Йакур Куçмич килнеле май.—Аса та илес çукчĕ вĕт! Анчах никама та çур сăмах каламастăп. Курман та, илтмен те пек пулас,

Йакур Куçмич арăмĕ темĕншĕн кăмăлсăр пулнă. Ун пек пулнине пĕртте юратман вара Йакур Куçмич. Вăл пур майпа та арăмне хаваслантарма тăрăшнă: шӳтле юрăсем юрласа кăтартнă, кулăшла историсем каланă. Анчах арăмĕ пуç ыратни çине персе çаплах шăмарса ларнă.

Шăп çав кас вĕсем патне Певцовпа арăмĕ килмеле пулнă. Вĕсен умĕнче те ырă мар пулма пултарать. Çавăнпа арăмин кăмăлне унчен мĕнле те пулин çавăрмалах...

— Кĕтерне,—тет Йакур Куçмич арăмĕ патне çывхарса,—есĕ питĕ ăслă арăм. Палкаса çӳреме юратмастăн. Çавăнпа сана каласа кăтартма та юрать. Анчах асту, никама та çур сăмах ан каланă пултăр.

— Пĕлетĕп-çке! Каламăп.

Йакур Куçмич арăмин хăлхи патне пĕшкĕнсе Иван Петровичран илтнĕ çĕнĕ хыпара каласа кăтартма тытăнать.

— Ăнлантăн-и мĕнлине? Анчах асту...

— Каламăп.

Пăртакранах Певцовсем килеççĕ. Чей ĕçеççĕ. Шахмăтла выляççĕ. Испанири лару-тăрусем çинчен калаçаççĕ. Унтан сăмах хăйĕссĕнех çĕнĕрен уçнă универмаг çине куçать. Ирхине Кĕтерне вăл магазинра çывракан пӳлĕмне лартма хитре сĕтел туйаннă пулнă мĕн. Певцов арăмĕ ăна çинчех кайса курма пикенет. Хĕрарăмсем йунашар пӳлĕме тухаççĕ...

Певцовсем çĕрлене йулса кайаççĕ. Çул çинче арăмĕ Певцова йатлама тытăнать:

— Çынсем пит аван пурăнаççĕ, а епĕр—хăйаматла пурăнатпăри тен. Йакур Куçмич хăй мĕн курни-илтнине йĕппи таранччен арăмне каласа парать. Есĕ манран пытарса çӳретĕн. Йут çын пекех епĕ сана.

— Манăн санран пытарса тăмали нимĕскер те çук.

— Ан çуклатса пыр ĕнтĕ тархасшăн.

— Чăнахах та нимĕскер те пĕлместĕп.

— Заçеданире пайан мĕн турĕç?

— Калапиç, нимĕскер те илтмен тесе.

— Чăнахи?

— Чăн пулмасăр.

— Апла пулсан итле! Анчах никама та ан кала. Вăрттăн йапала.

— Каламăп-çке, каламăп!

— Ă-ă... леш... мĕн, тет иккен.

Вăл упăшки хăлхи патне пĕшкĕнсе пăшăлтатма тытăнать.

— Чăнахи?—тет упăшки тĕлĕнсе.

— Чăн пулмасăр. Анчах асту...

Певцов килĕнче пирус çуккипе кӳрше, Тыңковсем патне, ыранччен пĕрер пачкă кивçен илме кайать. Тыңков ăна сасартăках ыйтупа тĕлĕнтерет:

— Илтни, çынсем мĕн тăваççĕ?—тет вăл.

— Ăхă!—тет Певцов хăй ăшĕнче.—Тыңков пĕтĕмпех пĕлет иккен! Унпа пăртак калаçкалама та юрать.

— Ҫапла,—тет Певцов.—Ун ҫинчен мана паҫăрах каларĕҫ. Тĕлĕнмеле йапала. А-а, леш... мĕн, тет иккен.

Певцов Тыҥков хăлхи патне пĕшкĕнсе пăшăлтатма тытăнаҫ.

— Чăнахи? — тет Тыҥков тĕлĕнсе. — Чăнах ҫапла-и?

— Есĕ ун ҫинчен илтмени мĕн?

— Ҫук, илтмен. Епĕ сана пачах урăх йапала ҫинчен каласа кăтартасшăн.

— Шăп кăна! Вăрттăн йапала. Никама та ан шарла.

— Пĕчĕк ачах марҫке ĕнтĕ...

Тепĕр кун ирхине Иван Петрович патне (калав пуҫламĕшĕнчи Иван Петрович патне) темĕнле ĕҫпе Петров пыраҫ:

— Есĕ ĕнер заҫеданире пулнах ĕнтĕ,—тет вăл Иван Петровича.—Ну ĕҫсем те! Мана Тыҥков каласа пачĕ. А-а, леш... мĕн, тет иккен.

Иван Петрович сасартăк ҫиленсе ўкет:

— Вăт тăм пуҫсем!—тет вăл хĕрелсе кайса.—Шĕлепкесем! Пакăлтисем! Парти вăртăнлăхĕсене сарса ҫўреме кам ирĕк панă вĕсене? Кун пек ҫынсене питĕ хытă айăплас пулаҫ. Вăл Тыҥковпа епĕ калаҫкалăп-ха. А сана, Петров йулташ, ак мĕн калатăп. Анчах шăп пул! Никама та ҫур сăмах ан кала. Вăл ĕҫ сана каласа пани пек мар, урăхларах пулнă. Леш... мĕн...

Иван Петрович Петров хăлхи патне пĕшкĕнсе пăшăлтатса калама тытăнаҫ...

Г. Рыклин.
(„Правда“)

## Комбинатри курăнмасҫ




— Тухтăр йулташ, куҫ вăйĕ начарланчĕ.

— Халех сăнаса пăхатпăр. Ав, сĕтел ҫинче хаҫат выртаҫ, ил те вула. Мĕн ҫырнă унта?

— „Хут пĕлменлĕхе тĕп туни“ тенĕ.

— Лайăх куратăн?

— Хаҫатрине лайăх куратăп, хамăрăн Куславкка комбинатĕнчине темĕн чухлĕ тăрăшсан та кураймастăп. Мĕншĕн тесен унта хут пĕлмен 100 ҫынран—39 ҫын, хут начар пĕлекен 321 ҫынран—148 ҫын ҫеҫ вĕренме ҫўреҫҫĕ, ыттисем ҫўремеҫҫĕ.

# Урана асаплантармалли



Вӑл пайан ҫеҫ туяннӑ ботинкине тӑхӑнса пӳлӗм тӑрӑх уткаласа ҫӳрерӗ. Ботинки ни хӗсмест, ни аслӑ мар, каснӑ-лартнӑ урипе виҫсе тунӑ пекех.

Хӑрах ботинкӑ чӗриклетнине илтсен, ҫичӗ ҫулхи ывӑл ачи чупса пырса:

— Атте, атте!—терӗ. — Хӑвна ваљљи есӗ ҫӗнӗ ботинкӑ туяннӑ. Манӑн ҫӗтӗккине пӗлместӗн.

— Ҫӗтӗлнӗ пулсан илсе парас. Анчах аму каланине есӗ итлесех каймастӑн пулмала?

— Нихӑҫан та итлеменни пулман, такам елекленӗ сана!—терӗ ача чӑмӑрӗпе ачашшӑн куҫне тытса.

— Паљљан ботинки чӑн ҫӗтелнӗ. Илсе парсан йураччӗ,—сӑмах хушрӗ амӑшӗ.— Пӗрле кайса илсе килӗр. Еп киле йулам.

Илмелине илесех пулаҭ. Филиппӑв пӑтӑм-пӑтӑм хура, тӗксӗм кӑвак тӗслӗ кепкине тӑхӑнчӗ те, ачине ҫавӑтса ботинкӑ туянма тухса карӗ.

Магазинра тавар илекен темиҫе ҫын анчах пулни Филиппӑва савӑнтарчӗ. Прикашчикӗ ача ваљљи 27-мӗш номӗрлӑ калӑппа тунӑ ботинкӑна часах тупса пачӗ.

Илнӗ-илменех ачи ботинка тӑхӑнса йачӗ.

Киле кайас ҫул ҫинче ларакан квас киоскинчен иртсен, Филиппӑв:

— Ҫӗнӗ ботинкӑпа утма пӗлместӗн-и мӗн? — ыйтрӗ ачинчен, вӑл уксахланӑ йевӗр уткаласа пынине кура.

Ай-ай-йай! Ачан уринчи ҫӗнӗ ботинкӑн кӗлли хӑпӑнса ӳкнӗ. Ҫӗнӗ ботинкӑ!

Киле ҫитес умӗн ботинкӑн ҫиййӗ те пӗр тӗлтен ирӗлсе ҫӗтӗлсе кайни курӑнчӗ. Мӗн тӑвас? Килте ку инкекрен мӗнле хӑтӑлмали ҫинчен шухӑшласа пӑхрӗ:

— Магазина ҫиййӗнчех кайсан ҫӗннипе улӑштарса парӗҫ-ха—терӗ вӑл арӑмне лӑпланнӑ сасӑпа.

Ачин ҫӗтӗк ботинкине илсе хутпа чӗркерӗ те, пӗчченех тухса утрӗ.

— Ку тавар ачу пуҫнех пултӑр!—терӗ прикашчик умне ача ботинкине кӑларса ҫапса. — Халех улӑштарса памасӑр хирӗҫсе тӑрсан, тем те туса хурӑп!

—Правлени хушмасӑр улӑштарма пултараймастӑп,—терӗ типӗ сасӑпа прикашчик.

Ирӗксӗрех хайхин правленине чупмала пулчӗ. Правленире пӗр ҫӗртрен тепӗр ҫӗре кайма хушахуша йарса, жалӑбӑ хучӗ ҫине тӗрлӗ йышши резољуцисем тем чухлех ҫыра-ҫыра пачӗҫ. Хучӗ пӗтӗмпех резољуцисемпе тулса ларсан, пирӗн хӗрхенме тивӗҫлӗ Филиппӑв магазина кӗрсе хутне прикашчика тыттарчӗ.

Кӑмӑллӑ прикашчик йулашки резољуцине вуласан, хирӗҫсе тӑмарӗ, ҫӗтӗк ботинкӑна вӗрҫӗннипех улӑштарса пачӗ.

Халӗ йӗнтӗ урампа пынӑ чухне Филиппӑв куҫӗсем иртсе пыракан халӑх ҫине кӑмӑллӑн пӑхаҫҫӗ.

Кил йенеле кайсан-кайсан, пирӗн Филиппӑва хӑйӗн сулахай урин пуҫ пӳрнине ҫил пырса вӗрнӗ пек туйӑнна. Пӑхрӗ—хӑйӗн пайан илнӗ ботинки „ҫӑварне, пӑтӑ пама ыйтнӑ пек, карса пӑрахнӑ". Ӑнланмаларах каласан, пӳрни курӑнакан пуличченех ҫӗтӗлсе кайнӑ ботинки.

Ҫакна курсан Филиппӑвӑн ватах мар шӑмшакӗ ҫӳҫенсе илчӗ.

Килне ҫитсен ачан улӑштарнӑ ботинкине тӳрех сӗтел ҫинӗ хучӗ те, арӑмне мӗн пулни ҫинчен каласа пачӗ. Уринчи ҫӗтӗк ботинкине хывса пӑрахса:

— Мӗн тӑвас? Улӑштарма кайас пулаҭ!—терӗ. —Ботинкӑ манӑн урӑх ҫук. Ҫавӑнпа хам ботинкӑна улӑштарма хам кайма пултараймастӑп. Санӑн кайса килес пулаҭ,—терӗ хӑйӗн арӑмне, вӑл ҫӗнӗ туфли йӗнер ҫеҫ туянса килнине аса илсе.

Ӑҫта-ӑҫта, кам-кам патне каймалине ӑнлантарса пачӗ.

Арӑмӗ упӑшкин ботинкине йатрӗ те, магазина кӗмесӗр тӳрех правленине чупрӗ.

Унта та кунта, кунта та унта, темиҫе ҫӗре, темиҫе хут та ҫитнӗ хыҫҫӑн, ҫырнӑ зайавлени хучӗ тӗрлӗ йышши резољуцисемпе талкишпех тулса ларнӑ хыҫҫӑн, ботинкӑна прикашчик пӗр тытӑнса тӑмасӑр улӑштарса пачӗ.

Инкек курӑнса килмест. Ҫӳренӗ хушӑра хӑй уринчи туфли ҫӗтӗлсе ураран тухса ӳкес патне ҫитнӗ.

Авалхи етем, инкек пулсан, „матӑшкипе пачӑшкине" асӑнса, ик аллине пӗҫҫи ҫумне шарт ҫапса тунката пек хытса тӑнӑ. Филиппӑвӑн мӑшӑрӗ ун пек хытса тӑмарӗ. Часрах киле ҫитес тесе, малала утрӗ...

Арӑмӗ туфли ҫӗтсе килнине пӗлсен, Филиппӑв зайавлени ҫырчӗ те, арӑмӗн туфлине улӑштарма тухса утрӗ. Ӑҫта-ӑҫта ҫитни ҫинчен калама кирлӗ мар. Ӑҫта-ӑҫта ҫитнӗ пулсан та арӑмӗн туфлине улӑштарса таврӑнчех. Анчах... киле таврӑнсан:

— Санӑнне улӑштарса килтӗм, хамӑн ҫӗтӗлчӗ!—тенине хирӗҫ арӑмӗ ним калама та пӗлмерӗ.

— Хывса пар еппин!—терӗ ҫеҫ кӑштах тӑрсан. Хывса пӑрахнӑ ботинкӑсене вӑл хутпа чӗркесе йӑтса, улӑштарма тухса утрӗ.

Ҫапла улӑштарса ҫӳренӗ вӑхӑтра хӑйӗн туфли ҫӗтӗлнӗ.

Малала та ҫаплах пулса пырать. Арӑмӗ кайсан—арӑмӗн туфли ҫӗтӗлет, упӑшки кайсан — упӑшкин ҫӗтӗлет. Вӗсем пайанхипе виҫӗ кун ӗнтӗ ҫапла пӗр-пӗринпе улшӑна-улшӑна урана тӑхӑнмалисем улӑштарма чупаҫҫӗ. Ак халӗ те Филиппӑв хул хушшине туфли хӗстерсе хватерӗн кил хапхи патнеле пырать. Хирӗҫ пыракан пиҫмоноҫӗц ӑна, палласа, „Горьковская коммуна" хаҫатӑн 207-мӗш номӗрне тыттарчӗ. Филиппӑв, утса пынӑ май хаҫатӑн малтанхи страницине ҫийелтен ҫеҫ пӑхса тухрӗ. Сасартӑк унӑн салхулӑ пулнӑ куҫӗсем чӑл-чӑл йалкӑшса илчӗҫ. Умстатйана чарӑнсах вулама тытӑнчӗ.

— Ахӑ! Ахӑ!—тесе, кӑмӑллӑ пулнине систерекен сасӑ ҫеҫ тухать унӑн кӑштах карнӑ ҫӑварӗнчен!—Хайхисене ҫаклатнӑ!..

Статйари ҫакӑ сӑмахсене вӑл пӗрре кӑна мар, икӗ хутчен хытӑ сасӑпах вуласа тухрӗ.

„Ҫӗлекен тата йусакан маҫтерскойсенче пуринчен ытла пахалӑхшӑн ответ тытни ҫук. Йусаттарнӑ атӑ кӗлли час-часах пӗр йе ик кунтан ытла ҫӳреме чӑтаймасть, ҫӗнӗрен йусаттармала пулать... Начар, питех те начар ӗҫлет пирӗн промкоопераци!"...

---

Тӑхӑнсассӑн магазинтан киле ҫитме чӑтайман ботинкӑсене епӗ Промсойузра ҫакӑнса тӑракан „Брак таварсен витрининче" куртӑм. Вӗсене тӑвакансен ҫамкисем ҫине „намӑссӑрсем" тесе ҫырас умӗн, епӗ витринӑ ҫинчи брака Филиппӑвпа арӑмне тӑхӑнтартса сирӗн ума кӑларас терӗм.

**Иван Мучи.**

# Ахаљ калаҫҫӗ ӑна

Михаил Михайлӑвпа епӗ пӗр тӑватӑ ҫул кайарах паллашрӑм. Теплерен Ваҫилсурск пристӑнӗнче, чип-чипер выртса пынӑ ҫӗртех, ҫемҫе чуста пек ҫат ҫитсе ҫапӑнтӑм ҫав ҫын ҫумне. Каҫарӑр, тетӗп ӑна.

Вӑл ман ҫине ҫемҫен пӑхса илчӗ те ним васкамасӑр:

— Ахаљ калаҫҫӗ ӑна!–тесе хучӗ.

Унтан уйӑрӑлсан пристӑњрен тухса ҫыран хӗрине кайса лартӑм. Михайлӑв манран инҫе те мар пӗр хӗрпеле ларать. Епӗ, пӗччен кичемленсе ларӑччен тесе, вӗсем калаҫнине хӑрах хӑлхапа итлетӗп.

— Миша, — терӗ, илемлӗ хӗрӗ, Михаил Михайлӑв хулпуҫийӗ ҫине сарӑ ҫӳҫне хурса—хулана ҫитсенех ҫыру ҫыр!

— Ахаљ калаҫҫӗ ӑна, — тавӑрать хирӗҫ. Хӗрӗ темшӗн кӑмӑлсӑрланчӗ пулас. Ларнӑ ҫӗртен сиксе тӑчӗ те, ҫинҫешке урам йеннеле утрӗ.

— Сывӑ пул!—тесе хӑварчӗ аллине сулса.

— Ахаљ калаҫҫӗ ӑна, - ҫухӑрса йулчӗ ун хыҫӗнчен.

Хӗртен уйӑрӑлсан, Михайлӑв пирусне кӑларса, епӗ ларнӑ ҫӗреле утрӗ.

— Ха, хӗр темерӗн-и, мана пӑхӑнтарасшӑн тата,—терӗ ҫитсе тӑрсанах.

— Пӑхӑнтарса мар, ҫилентертӗн пуљ?

— Ахаљ калаҫҫӗ ӑна. Епӗ вӗренмен хӗрсемпе калаҫасшӑнах мар: манпа калаҫма наукӑ никӗсне шӑлпа хӑйраса йарас пулать, тетӗп. — Лупас пек ҫӗлӗкне ҫамки ҫинерех пусса лартать.

Ну, калаҫатпӑр ҫав йӗкӗтпе. Вӑл пӗр хулари института кӗме кайать иккен. Пӗтӗм корзинкисенче, арчисенче кӗнеке таврашӗ йӑванса выртать. Кӗсйинчен хӑмла шуччи пек чӗркесе чикнӗ тетрадсем курӑнса тӑраҫҫӗ. Тӳсеймерӗм:

— Есӗ мӗн темӗн чухлӗ кӗнеке ҫӗклесе ҫӳретӗн?

Вӑл пӗрре ман ҫине, тепре Атӑл ҫине пӑхрӗ те:

— Килте хатӗрленеймерӗм ҫав, ҫул ҫинче вӗренсе кайас терӗм, кунта та вӗренме ҫук: хитре хӗрсене курсанах вулас килми пулса кайать.

— Есӗ,—тетӗп тимлесех, — мӗншӗн малтанах хатӗрленмерӗн?

— Хатӗрленмерӗн? Мӗн тума хатӗрленетӗп: ӗлӗк батрак пулнӑ, кӗтӳ кӗтнӗ — мана илмесен кама илмеле? Ҫав хӗрлӗ туталисене-и?

Ӑна хирӗҫ каламарӑм та. Ҫынсем чӑн пӗлӳ илесшӗн, вӑл йатне ҫеҫ тӑвасшӑн, тесе уйӑрӑлтӑм.

Ҫак калаҫу хыҫҫӑн тӑватӑ ҫул иртрӗ. Епӗ Хусана кайма тухнӑскер Чикме хули ҫине пӑхса пыратӑп. Пӑрахут анатала шӑвать.

— А-а, Петрович!—тӗртрӗ мана такӑшӗ.

Пӑхатӑп: Михайлӑв кулкаласа тӑрать. Авалхи йулташпа калаҫатпӑр. Кулкалатпӑр. Тӳсеймерӗм:

— Есӗ ӑҫта кайатӑн?–персе те йатӑм.

— Авӑ, шӑлӑма испытанине илсе кайатӑп, техникума вӗренме кӗресшӗн,—терӗ вӑл пӗр ача ҫине кӑтартса,—ҫу каҫипе хатӗрлентертӗм вӗт.

Мана унӑн ӗлӗкхи сӑмахӗ аса килчӗ.

— Ахаљ калаҫҫӗ ӑна,—тесе йатӑм йурийех.

— Ҫук. Ӑҫтан ахаљ пултӑр. Халӗ пӗлӳ ҫук пулсан хӑмпу шанчӗ ӗнтӗ, виҫ-тӑватӑ ҫул кайала урӑхлаччӗ те...

Вӗренӳ пахалӑхӗ ӳсни ҫинчен калаҫатпӑр. Хут ӗҫне ҫирӗп пӗлессине аса илетпӗр.

— Вӗренес пулать, наукӑ никӗсне алла ҫавӑрса илмесен...

— Ахаљ калаҫҫӗ ӑна!—тетӗп епӗ каллех.

— Ну ахаљ. Мансан та йурӑччӗ авалхине,—терӗ те шӑлнӗне чукун ҫул ҫинчен ӑнлантарма тытӑнчӗ. Епӗ хамӑн кайутӑ йеннеле утрӑм.

**И. Кашлинке.**

# Ачасен  страници

### Йапăх вĕренекен

— Есĕ вырăс чĕлхипе тĕрĕс çыратăн-и?
— Çыратăп. Епĕ вырăсла çырнă чухне йанăш ан пултăр тесе, „т"-семпе „п"-сене кирек хăçан та хытă саспаллисемпе çыратăп.

**С. Павлăв.**

### Кун пек ан пултăр

В ĕ р е н т е к е н: — Дежурнăй, урокра мĕншĕн хăш ачасем çук?

Д е ж у р н ă й:—Халех калатăп: Иванов автобус хыççăн çакăнса анатала карĕ. Карпăв грузовикрен çакланса тепĕр йенеле вĕçтерчĕ. Кайри партăри Хвекла пасарта хĕрсемпе тăратчĕ. А Мĕтри киоскăра учебник суйлаť. Уļана пуļница шурĕ, Ваçça почтăраччĕ... Çак сехетрех çитеççĕ пулĕ-ха.

**Х. Шывçи.**

### Класра

— Гераçимăв, есĕ мĕншĕн 7-мĕш класа кĕрсе ларнă? Есĕ пуçламĕш шкул пĕтернĕ хыççăн вĕренмен-çке урăх?
— Манпа пĕрле пуçламĕш шкулта вĕреннисем халļ 7-мĕш класра та, епĕ çавăнпа кĕтĕм. Ик çул хушши шкула пăрахмасăр çӳренĕ пулсан епĕ çав-çавах кăçал 7-мĕш класра пулаттăм-çке?

**Х. Шывçи.**

### Индуссен мыскари

Катарака йатлă йалта Лунтака йатлă çын пурăнă. Унăн Кунтака йатлă вĕренекенĕ пулнă. Çав вĕренекен айвантарах, çитменне выçлăх ача пулнă. Кунтакана пĕрре тахăшĕ хăйĕн учителне пама 32 хуран кукли парса йанă. Акă вăл кученеç леçме тухнă. Çул çинче унăн çийес килсе кайнă.

— Епĕ учителĕ патне 32 кукăļ илсе пырăп. Вăл мана калĕ: çуррине ху çисе йар, мана тепĕр çуррипе çитет, тейĕ. Çапла çурри ĕнтĕ манăн пулаť. Хамăнне епĕ халех çиме пултарап, тесе шухăшланă.

Çапла шухăшланă хыççăн 16 куклине çисе йанă. Малала утнă.

— Акă епĕ учителĕ патне 16 кукăļ илсе кайатăп. Учителĕ, паллах, мана çуррине паратех. Апла пулсан, 8 кукли манăн пулаť.

Саккăрăшне çисе йанă. Татах малала утнă. Утнă хушăрах шухăшланă:

— Учителе пама 8 кукăļ илсе кайап. Вăл çуррине хăвах ил, тейĕ. Апла пулсан, епĕ вĕсене халех çисе йама пултаратăп. Тăваттăшне çинĕ. Татах утнă, татах шухăшланă:

— Тăваттăшĕнчен иккĕшĕ манăн.

Икĕ кукăļ йулнă.

— Иккĕшĕнчен пĕри манăн, тепри Лунтакан, тенĕ те пĕрне çинĕ.

Пĕр кукăļ йулсан, чăтнă-чăтнă, йулашкинчен:

— Учителĕ манпа пурне те çурмала тăваť, апла пулсан çуррине çиме пултаратăп,—тенĕ. Çуррине çинĕ.

Çуррине йатса Лунтака патне чупса пынă.

— На, çи!—тенĕ.
— Çав анчах-и?—тĕлĕннĕ Лунтака.
— Ыттисене хам çисе йатăм,—тенĕ Кунтака.
— Мĕнле-е?—кăшкăрса йанă учителĕ.
— Ак çапла!—тенĕ Кунтака йулашки çур кукăļне çыртса илсе çăтсах йарса.

### Арифметикăпа кутăнланакан

У ч и т е л:—Ваçça, калăпăр, санăн пилĕк улма пулнă. Иккĕшне хăвăн шăлнуна паратăн,—санăн миçе улма йулаť?

В а ç ç а:—Мĕн тума парап еп ăна. Тем чул тархасласа ыйтсан та парас çук.

У ч и т е л:—Аннӳ пама хушсан памасăр тăраймастăн ĕнтĕ. Çапла иккĕшне парсан миçе йулаť?

В а ç ç а:—Пиллĕк.

У ч и т е л:—Ма апла?

В а ç ç а:—Анне тухса кайсанах улмисене епĕ туртса илетĕп.

У ч и т е л:—Мĕнле, Ваçça, есĕ тăнсăр ача пултăн-ха. Ну, калăпăр, санăн пилĕк улмаран иккĕшне шăлнуна ирĕксĕрех памала пулсан, хăвна ваļļи миçе йулаť?

В а ç ç а:—Нимĕн те йулмаť.

У ч и т е л:—Мĕнле нимĕн те йулмаť?

В а ç ç а:—Еп вĕсене пĕтĕмпех çисе йаратăп.

### Тĕрĕс мар-и мĕн?

Германире пĕр шкулта учителĕ арифметика урокĕнче ачасене дроб çинчен вĕрентет. Пĕр ачана çапла задач параť:

— Аш татăкне касса икке уйăратăп та, манăн мĕн пулаť?
— Çуршар икĕ татăк.
— Вăл татăка тата çурмаран кассан мĕн пулаť?
— Чĕрĕк.
— Тата çурмаран кассан?
— Восмушкă.
— Унтан?
— 16-мĕш пайĕ.
— Унтан?
— 32-мĕш пайĕ.
— Унтан?
— Пирĕн ирхи апат пулаť,—тет ача.

### Ыттисем вĕçсе кайнă

Таļăна учителница пит çăмăл задач класа параť:

— Сĕтел çинче пĕтĕмпе тăватă шăна ларнă. Пĕрне çапса вĕлерсен миçе йулнă?
— Пĕрре йулнă, вилни,—тенĕ Таļă.

# Аттестаци çиçĕмĕ

Трак районĕнчи учительсене августăн 20-мĕш кунĕнчен пуçласа аттестаци пама тытăнаççĕ, тенĕ хыпар çиçĕм çути хăвăртлăхĕпе района саланчĕ.

Районĕпе 200 учитĕл. Учитĕлсем нумайĕш, аттестаци комиççи ĕçленĕ хыççăн вĕрентӳ ĕçĕ ытларах малала кайасса ĕмĕтленнипе савăнса хĕпĕртерĕç, хăшĕсен пуçĕсем усăннă пек пулни сисĕне пуçларĕ.

— Çĕнĕ костум тăхăнатăп, галстук çакатăп, куçлăх тăхăнатăп, портфĕл илетĕп те, вулав çуртĕнчен илнĕ кĕнекесене илсе комиççи умне çитетĕп. А пĕллетĕр пулĕ есĕр, епĕ вĕт ытларах философи ăслăлăхпе интересленетĕп, тейĕп. Кăçал Ларйе Мирнен 27-мĕш томне, Халим Серггунăн 36-мĕш томне вуласа тухрăм, тейĕп. Манран вĕсем шалтах тĕлĕнĕç. Трофимăв йулташа Кивйал шкулĕнчен халтерех ăслăлăх институтне йе педагогикă институтне доцент туса куçарас, тейĕç. Ылтăн пуçăм! Чăн та ахах пĕрчи пек санăн шухăшусем,—хĕпĕртерĕ Трофимăв учитĕл.

—Горйки тата Шупашкар хулисенчи педагогикă институчĕсенче заочникре тăратăп. Зачотсене вăхăтра паратăп, тейĕп. Хама Мăн Шетмĕри кĕçĕн вăтам шкулăн 1-мĕш класĕнче тытнă пирки ӳпкеленнĕ пек пулăп. „8—9-мĕш классене куçарас“ тейĕç комиççи членĕсем, — хăйне хăй лăплантарчĕ Йевграфăв йулташ.

— Апла мар, таратăп Хусана. Аттестаци пĕтиччен сĕтĕрĕнсе çӳретĕп. Хамсăр мана кăларма пултараймаççĕ, тен, епĕ профессăртан кайа мар çын,—терĕ Катек шкулĕнче вĕрентекен Виноградăв.

— 1918 çулта. 1818 çулта, 1818 çулта... 1818 çулта... 1818-мĕш çулта çуралнă. Куна вĕрентĕм. Политикăпа мана çапаймĕç. Çулпуçсен биографисене пĕлетĕп. Интернационалсене пĕлетĕп. Сйессене пĕлетĕп. Политикăна пĕлекен çынна учитĕлрен кăларма пултараймаççĕ, терĕ Анаткас шкулĕн обшчествовечĕ Дубăв.

— Котангенс, аха, — культурное организацие трудовых академиков народа, главная единица научной силы. Ку котангенса епĕ тавнах пĕлесшĕнчĕ, тинех пĕлтĕм. Математикăпа лачаканах лармăпăр-ха,—лампăна сӳнтерсе тӳшек çине выртса лăпланчĕ Пăрăнтăк шкулĕн математикĕ Авралăв.

Çапла хатĕрленчĕç чылайĕшĕ ыранхи куна.

* * *

— Ах, хăш çветуйа асăнсан çăмăлрах-ши, — хашт хуйхăрса илнипе аттестаци комиççи ларакан пӳлĕмĕн алăкĕ уçăлса хупăнчĕ. Пирĕн умра Кушкă шкулĕнче вĕрентекен Владимирăвă.

— Есĕр вĕрентекен класра вырăс чĕлхин грамматикине мĕн-мĕн кĕрет-ха? — ыйтат комиççири пĕр йулташ.

— А-а, вот... Хайхискер, леш, ех, калаймарăм, тфу, вăт чĕлхе вĕçĕнчехчĕ-ха, е, глагол — глагол, сказуемое, деепричастие вĕренмеле.

— Есĕ пĕр предложени шутласа çыр-ха,—ыйтрĕ тепри.

— „Сиводня третйе день работает атестационый комисии“,—çырчĕ Владимирăвă.

— Йăнăшсем пур-и,—ыйтаççĕ комиççирен.

— Çук.

— Хăшĕсем пулаççĕ кунта имя существительное, сказуемое, тата ытти те?

— Кунта çук вĕсем, грамматикă çинче çеç.

— Халĕ шăрçа шучĕ çинче 200 хурăр-ха.

— Икçĕр мар! Санăн 2 единицă хуни çеç пулчĕ.

— Каллех 200 мар, 20 çеç.

— Пĕлместĕп епĕ шăрçа шутне, епĕ счетоводсен курсĕнче вĕренмен,—ответлет пăшăлкăн.

— Ăçта вĕренсе тухнăха есĕр? — ыйтат РОНО пуçлăхĕ.

— 9 кун акушеркăсен курсĕнче.

Владимирăвăпа ĕç пĕтрĕ. Пирĕн умра Мăн Шетмĕри кĕçĕн вăтам шкулра вĕрентекен Евграфăв йулташ.

— Здравствуйте?

— Здравствуйте!

— Есĕр ку плана хусамăрах çырса-и?

— Хамăрах.

— Автобиографине?

— Хамăрах.

— Мĕншĕн сирĕн темиçе алăпа çырнă пек?

— Çырнă пек?

— Манăн аван перо пурчĕ, вăл халĕ çухалчĕ,— ответлет манăн Евграфăв.

— Халĕ ĕнтĕ нихçан та лайăх çыраймастăр?— тĕпчет комиççи.

— Аплах мар та.

— Пĕлӳве хăпартатăр-и?

— Я заочно обучаем, в Горьковском и Чебоксарском институте,—терĕ вăл.

— На каком факультете?—ыйтат комиççи çыруçи.

— В историческом.

— Какие учебники читаете по истории,—ыйтрĕ комиççи председателĕ Хрусталђов й.

— Покровский „История своего народа“.

— Припомните один раздел из этой книги?

— Промышленный переворот в Англии.

— Достаточно, терĕ комиççи. Ку сăмаха илтсен Йевграфăв та хĕпĕртесе: — Пока, товарищи, тесе пӳлĕмрен тухрĕ.

Аттестаци комиççи витĕр пуринчен ытла Авралăв аван тухрĕ Пулĕме кĕчĕ, картусне хыврĕ те, йăвăррăн сывласа илчĕ. Кăпăк пек шурă кӳпшек пичĕсем çине пăнчăн-пăнчăн йун хĕрлисем тухрĕç. Чĕркуççисем чĕтреме тытăнчĕç. Чăтаймарĕ: — А, йулташ Хрусталђов, епĕ, хамăн вар чирĕ чикĕрен тухса кайнă пирки, пĕр чĕрĕк минут та ларайМастăп, сывă пулăр,—тесе чупсах тухрĕ пӳлĕмрен.

* * *

Аттестаци „çиçĕмĕ“ 24 çынна учитĕлсен тĕнчинчен кăларса пăрахрĕ.

Шел, питĕ шел! Анчах 24 çын 2000 ытла çамрăк ачасене унччен уксахлатса, суккăрлатса тата чĕлхесĕрлетсе пурăннăшăн татах шел, тесе калама тивет.

**Сӳпенкке Илли.**




## Йурату

Икĕ çын столовăйĕнче апат çинĕ хушăра çапла калаçса ларaççĕ:—Ăна йуратнине пула мĕн-мĕн тӳссе иртерни çинчен каласа та пĕтерес çук,—тет пĕрремĕшĕ.—Вăл çук чухне савăнăç та савăнăç мар, ĕç тĕлне те пĕлми пултăм. Унпала чĕлхе - çăварăм çав тери усăлса кайаť, чĕрем те хытăрах тапма тытăнаť. Сивĕ çанталăк та ăшшăн туйăнаť.

— Апла пит вăйлă йуратнă ăна есĕ?

— Пĕре ерне ытла ăна курма май килмерĕ. Çав кунсенче чĕрем уншăн мĕнле çуннине калама та пĕлес çук.—Çынпа калаçми пултăм. Çиме ларсан аш йашки анми пулчĕ.

— Нумай курман хыççăн ăна тĕл пулсан мĕн тери савăнтăн пулĕ?

— Савăнмасăр. Унăн çутă сăнĕ çине пăхса тăнă хыççăн чăтаймарăм—чуптусах илтĕм...

— Çын курмарĕ-и?

— Пӳртре никам та çукчĕ... Каçхине ун пирки шыва кайса сикнĕ. Çынсем туртса кăларчĕç.

— Ма шыва сикнĕ? Вăл сана улталанăн туйăнчĕ пулĕ.

— Улталаť çав, вăл такама та улталаť.

— Илемлисем çавăн пек çав! Сарăскерчĕ-и хăй, хураскерчĕ-и?

— Сарă?! Хура?!.. Мĕнле?

— Хĕрĕ сарăскер-и, хураскер-и, тесе ыйтатăп санран.

— Хĕрĕ? Мĕнле „хĕрĕ"? Ерехе йуратнă пирки мĕн курни çинчен каласа патăм сана. Есĕ „хĕр" теме пуçларăн. Ха-ха-ха!.. „Хĕр"! Ерехе хĕр терĕ.

## Йăпăлти

Местком заçеданийĕ вĕçне çитсе тăнă, анчах решени нимĕнле те йышăнман. Ырханкарах вăрăм çын пуринчен ытла кăшкăрашнă.

— Йтлĕр-ха!—тенĕ йулашкинчен вăл.—Вăл ыйтусене пурнăç хăй вĕт кăларса тăратрĕ.

— Ехе, каларĕ,—тенĕ пĕр çамрăк мар, хăйне тăпăл-тăпăл тытакан етем.—Пурнăç кăларса тăратнипе хăратма хăтланаť. Хамăр началџствă кăларса тăратнă пулсан!.. тенĕ.

## Йурăхсăр ашшĕ çинчен

Виçĕ çулхи ачине амăшĕ йăпата-йăпата пăтă çитерет:

— Çи-ха, ачам çи! Ку кашăк пăттине маншăн çи! Çирĕн? Халĕ тепĕр кашăк асаннӳшĕн çи. Çапла-а! Татах тепĕр кашăк кинемӳшĕн çи.

— Аттешĕн тата?

— Аçушăн ан çи! Вăл сана тăрантармалăх ку уйăхра пĕр пус укçа та йарса памарĕ.

## Тунчĕ

— Есĕ, паха йулташ, пĕрмай ĕçетĕн. Тĕрлĕрен сăра сутакан киоскăсем тăрăх пĕрмай сĕтĕрĕнсе çӳретĕн.

— Çук, суйатăн. Тĕрлĕ киоскăсене çӳреместĕп, пĕр киоска çеç çӳретĕп.

## Иккĕшĕн те çителĕксĕр пулнă

Икĕ пуçлăх урамра тĕл пулаççĕ. Иккĕшĕн те пуçĕ усăннă:

— Ăçтан таврăнан?

— Çавăнтан,—тесе хăй ĕçленĕ учреждениреn аслăрах учреждени çурчĕ йенеле кăтартса.—Есĕ тата?

— Епĕ те çавăнтан!—терĕ çав учреждени çурчĕ йеннеле кăтартса.—Пĕçертсе йачĕç.

— Пĕçертсе йачĕç? Мана та çапла çав, пит вăйлă пĕçертрĕç. Сана мĕншĕн?

— Мана-и? Пахалăхшăн—качествăшăн. Сана?

— Мана-и? Мана—хисеплĕхшĕн — количĕствăшăн.

## Чейе счетовод

Шалу ӳстерес шухăшпа пуçлăхĕ патне пыраť счетовод. Çапла пуçласа йараť хăйĕн сăмахне:

— Пуçлăхăм, мана тепĕр учрежденийе бухгалтĕр пулма чĕнеççĕ. Тем тăвас—те кайас, те кайас мар,—тет.

Пуçлăх ăна:

— Чĕнеççĕ пулсан каймасăр ан йул. Тĕрĕссипе каласан, есĕ счетовод ĕçне те кирлĕ таран пĕлместĕн, тет.

Çавăнтан вара счетовод шалу ӳстерес шухăша пăрахаť.

## Ш е л

— Шăмăршă районĕн Кивĕ Чукал йалĕнче кĕçĕн вăтам шкулăн директăрĕ пулса ĕçлекен Рубцов Михаилран вунă çул ĕлĕкрех пĕр хĕр ача тунă. Халџхи вăхăтра ача вунă çула çитнĕ ĕнтĕ. Вырăс Чукалĕ йалĕнче пиччĕш патĕнче пурăнаť. Рубцов ачине пĕрттех пулăшу памасť.

— Шел!

— Ачине-и?

— Ачинчен ытларах Рубцова шел.

— Ăна ма шел?

— „Капкăн" пĕлсен, пĕтĕм чăваш халăхĕ умĕнче ăна намăс кăтартĕ.

## Хăйĕн ботаникă

— Сирĕн клубра кулџтурă тĕлĕшпе ĕçленин çимĕçĕсем курăнма пуçларĕç ĕнтĕ.

— **Çимĕçĕсемех** халĕ курăнаймаççĕ те-ха, **çемĕчкисем** нумай вара.

# Хут пĕлменлĕх „тусĕсем"

## Пĕрне пĕри хирĕç тăракансем

Вăрмар районĕнчи Арапуç йалсоветĕнче çакăн майлă калаçу пулса иртнĕ.

Колхоз председателĕн заместителĕ пулса ĕçлекен Кудрйашовран:

— Сирĕн колхозра хут пĕлменнисем 19 çын,— ма хут вĕренме çӳремеççĕ?—тесе ыйтнă.

— Пĕлместĕп,—тенĕ Кудрйашов.

— Пĕлместĕн?! Есĕ хут пĕлменлĕхе тĕп тăвас ĕçе хирĕç пулĕ апла?

— Еп хирĕç мар. Хут пĕлменлĕхĕ хăй мана хирĕç. Колхозра ăна тумала, кăна тумала, мана хут пĕлменнисемпе аппалантарса чăрмантарасшăн. Хут пĕлменлĕх мана хирĕç тăни пулаť ку?

Епĕр хут пĕлменлĕхе те, Кудрйашова та хирĕç.

## Курăнмасť

Америкари Çийерра-Невадă ту айаккинче ӳсекен мамăнт йăвăç çӳллĕшĕ 60 чалăшран иртсе кайаť.

Çав йăвăçа кунта илсе килсе лартса ун тăррине улăхса (хăпарса) пăхсассăн та Пăрачкав районĕнчи Низовски йалсоветра 63 хут пĕлмен, тата сахал пĕлекен 62 çынна вĕрентес ĕç аван пыни курăнайрас çук.

Кăçалхи май уйăхчен вĕсем пĕртте вĕренмен. Унтан темиçе кун хушши пухăнкаланă та кайран каллех пăрахнă. Йалсовет председателĕ Милцеткин „хут пĕлменлĕхе тĕп тăвас ĕçе сарма майсем çук" тейекен теорийе сарса çӳренĕ.

Хут пĕлменнисене вĕрентес ĕçе организацилессинчен Милцеткин йулташ пит хăраť. Хăранипе тĕп сакайне кĕрсе ларман-и вăл? Кĕрсе ларнă пулсан туртса кăларма вĕрен кирлĕ пулĕ?

## Пит-куç

— Тăвай районĕнчи Çĕнĕ Пуйанкасси йалсовет председателĕпе колхоз председателĕ хут пĕлменлĕхе тĕп тăвас ĕç çине çавăрăнса пăхаймаççĕ.

— Ма çавăрăнса пăхаймаççĕ?

— Темĕншĕн. Те мăйĕсем çине çăпан тухнă.

Учителсем вăл йалта хут пĕлменнисем шкула пырасса кĕтсе лара-лара пит нумай вăхăт иртереççĕ (колхоз правленийĕпе йалсовет хут пĕлменнисене пухас тĕлĕшпе нимĕн те ĕçлемеççĕ).

Хăйсем нимĕн те ĕçлеменнин айăпне учителсем çине тийес тесе, йалсовет председателĕ августăн 20-мĕшĕнче 3 хут пĕлмен çынна çур-çĕр иртни 4 сехетрех шкула пухнă та, анчах вĕсем пухăнасси çинчен учителе малтан систермен. Пухăннисем çур сехетрен килĕсене саланнă вара. Йалсовет председателĕ Феодăрăв:

— Учител шкула пыман пирки пайан заңати пулмарĕ,— тесе çӳреме тытăннă.

Августăн 20-мĕшĕнче йалсовет председателĕ хут пĕлменлĕхе тĕп тăвасси çине питпех çавăрăнса пăхнă. Анчах çавăрăнса пăхнă чухне пичĕ унăн питех те илемсĕрĕн курăннă та,—çапах нимĕн те тума çук,—мĕншĕн тесен, унăн пит-куç урăх йышши, илемлĕн курăнаканни пулман.

## Факт

Пойăспа йе пăрахутпа йамали хăш-пĕр тавар çине вырăсла „Осторожно" тесе çыраççĕ. Апла калани вăл тавара асăрханса тыткаламалине пĕлтерет. Хăш-пĕр заметкăсем çине „Факт" тесе çырма тивет. Апла каламасан унта çырнине кам та пулин „чăн пулман ĕç, йумах ку" тесе шухăшласа илме те пултараť.

Тутаркас райĕçтăвкомĕнчи çар сĕтелĕн работникĕ тырпул пуçтарас умĕн райçутпайĕн пуçлăхне—Пожеданăва:

—Хутла сахал пĕлекен допризывниксене тырпул пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра хут вĕрентме пăрахтарас пулаť,—тесе темиçе хут та пырса аптăратнă.

Халĕ ĕнтĕ ĕçĕпе вулакансем паллашнă хыççăн малтан хамăр „Факт" тесе панă заметкă йатне улăштарса, вырăсла çырас пулсан, „Безобразие" теме пултаратпăр.

## Сурчăк

Мăн Карач йалсоветĕнче (Тутаркас р.) вĕрентме пухнă хут пĕлменнисене апрелĕн 29-мĕшĕнче „çураки тума" тесе пурне те килĕсене салатнă. Çуракине вăл йалта майăн 3-мĕшĕнче тин тухнă. Майăн 25-мĕшĕнче вăл йалти хут пĕлменнисенчен ыйтрăмăр:

— Есĕр ма хут вĕренместĕр?

— Вĕренетпĕр те, халĕ пире çураки тумашкăн каникула салатнă-çке,—терĕç.

Ииуң уйăхĕ вĕçĕнче епĕр вĕсенчен каллех малтанхи пек: ма хут вĕренместĕр, тесе ыйтрăмăр.

— Çураки каникулĕ иртмен-ха,—терĕç.

Ииуљ уйăхĕн вĕçĕнче каллех çавăн пек ма хут вĕренмĕнни çинчен ыйтрăмăр.

— Çураки каникулĕ иртмен-ха,—терĕç.

Август уйăхĕн вĕçĕнче панă ответ та çавăн пек. Çенťабĕрĕн пуçламăшĕнче те:

— Миçе хут каламала сире: пире çураки тума каникула йанă тесе!—терĕç.

— Хăçанчен пыраť вара сирĕн çураки?

— Ма васкас? Килес çул çураки каллех пулаť. Иртнĕ апрел уйăхĕнче саланни килес çулхишĕн те пулчĕ пулĕ,—терĕ лач сурса йарса пĕр хĕрарăмĕ.

Анчах сурчăкĕ йалсовет председателĕн питкуçне тивмерĕ, мĕншĕн тесен епĕр каласнă чухне вăл çукчĕ (правленире лараťчĕ).

## Чейе хăлха

Тăвай районĕнчи „Тăрмăш" колхоз председателĕ Казакова „очковтирател" теме пултараймастпăр епĕр. Хăйĕн çитменлĕхĕсене вăл сахалăн курăнмала туса каламасť. Кала есĕ ăна: „санăн пĕр çитменлĕх пур" тесе. Вăл сана: манăн пĕр çитменлĕх мар, 500 çитменлĕх пур, тесе таврса хурассăн туйăнаť.

Санăн пуçăнтан пĕр винтă тухса ӳкнĕ тесессĕн: пĕр винтă мар, 500 винтă тухса ӳкнĕ, тесе калассăн туйăнаť.

— Сирĕн колхозра хут пĕлменни миçе çын?—тесе ыйтсан.

— Хут пĕлменни-и? 500 çын пулмала, терĕ.

Тĕрĕслесе пăхсан вăл колхозра хут пĕлменни 47 çын пулни палăрнă.

— Ма вăл хут пĕлменнисен шутне ÿстерсе калама йуратаť?

— Ек, кей! Хут пĕлменнисем ытла нумай та, вĕсене кăçалах вĕрентсе пĕтерес çук тесе хут пĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе организацилессинчен хăтăлса йулма хăтланаť.

Чейе иккен Казакован пуçĕ.

— Пуçĕ кăна мар, хăлхи те чейе. Чăваш правитĕлстви: хут пĕлменлĕхе 1936 çул вĕçне çитиччен тĕппипех пĕтерсе хурас, тенине илтмĕш пулнă.

### „Тавтапуç“ текенни кам пулнă?

Факт çапла:

Чăваш республикĕн Халăх комиссарĕсен канашĕпе ПСК(б)П Чăваш обкомĕ мартăн 7-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх Чăваш республикĕнче хут пĕлменлĕхе 1936 çул вĕçне тĕппипех пĕтермеле.

„Куславкка комбиначĕ“ хаçат хăйĕн 14-мĕш номĕрĕнчи умстаťйинче: „Сойуз членĕсем хушшинче хут пĕлменлĕхе 1936-мĕш çулта, çитĕннисем тата вĕсен çемйе членĕсем хушшинче 1937-мĕш çулта пĕтермеле,—çапла задач“, тесе çырнă.

Çапла çыракан „Куславкка комбиначĕ“ хаçачĕн редакторĕ пулнă Мошков çинчен мĕн каламала? А. Дйума писатĕлĕн „Королĕван мăй çыххи“ йатлă романĕнче:

— Тавтапуç!–тенĕ граф, хăйĕн сулахай ÿпкине хĕçпе тирсе амантакана хирĕç.

— Йураť!—тенĕ лешĕ йунланнă хĕçне тутрипе шăлса илсе.

Çавăн пек „Куславкка комбиначĕ“ хаçат редакторĕ пулнă Мошков комбинатри хут пĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе „перопа“ тирсе амантнă. Такам çапла тунине хирĕç:

— Тавтапуç!—тенĕн туйăннă ăна.

Çавăнпа вăл:

— Йураť!—тенĕ те, перине редакцири сарăрах сăнлă шурă хутпа шăлса илнĕ.

## Хÿтĕре

Тÿперен хĕвелĕ чăтма çук хĕртет,
Хÿтĕре кушак ыйхăна илет.
Сывлăшра вĕçсе иртекен курак,
Кушак лăпкăн выртнине кура,
Сасă пачĕ: ка-ам...тутлăн çывăраť?
Ăна хирĕç вĕçекен чана
Ăнлантарчĕ каласа ăна:
— Чан-чан! Чăн кахал!
Çĕнтерейместь ыйăха...
Шиклĕ чĕри хытă тапнăран,
Кушак та вăранчĕ ыйхăран,
Мăрлатма пуçларĕ пур вăйран:
Мăр-р!..
Çăкăр-р!..
— Çăкăр?—ыйтрĕ курак кушакран,—
Ĕçлемесĕр кам патăр сана?
— Маншăн ыйхă ĕçрен хаклăрах,
Сывăрсассăн хырăм лăпланаť,
Ĕçе тухсан çурăм ыратаť...
Çывăрмашкăн выртрĕ вăл татах:
Хăр-р, хăр-р!..
Мăр-р, мăр-р!..

**К. Костин.**

## Кăшкăракан факт




**— Пирĕн клуб пуçлăхĕ йапăх ĕçлесе пыраť.**

**— Апла тетĕн, анчах йапăх ĕçлени çинчен кăшкăрса тăракан фактсем клубра пур-и?**

**— Пур.**

**— Мĕн?**

**— Нимĕн чĕнмесĕр ларакан громкоговоритĕл!**

---

### Икĕ ача

— Иккĕн йĕтес туртар-и?

— Мĕнле?

— „Капкăн“ илмеле.

# Фрица тытаймăн

*Çмехăв тунă картинкăлă калав. „Затейник“ журналтан.*



— **Тахăшĕ каллех кунта çăлтăр туса хăварнă**



— **Каллех çăлтăр туса хăварнă. Ăçта, ăçта-ши хăй...**



— **Ах, ку Фрица! Унăн ĕçĕ ку? Ăçта-ши хăй? Тытсан лектерепчĕ...**




— **Ку çăлтăра та вăл тунă! Тытсан çăнăх тусах хурăттăм...**




— **Татах тем? Ах, шуйттан, сана епĕ тытăпха!**



— **Вĕçтере пар,—тенĕ фашиса рабочисем.— Фрица епĕр сана памăпăр.**

**Вулакансем, çав Фрица есĕр тупайăр-и? Вăл çакăнта ўкернĕ кашни картинкă çинчех пур,— тимлерех пăхсассăн есĕр ăна тупатăрах.**

---

## Ёсмел йалĕнче

— Пăх-ха фермăри сыснасем пурте, ватти-вĕттипех правлени çурчĕ патнеле йĕркелĕн утаççĕ. Мĕн кирлĕ-ши вĕсене?

— Апат памаççĕ фермăра. Шамбов кашни кунах ўсĕр, Шамбов çинчен правленине жалăбă пама килеççĕ-и тен.

**Вл. Шлихĕр.**

## Медицинăри çĕнĕ йапала

— Мана чиртен сывалма тарлама хушаççĕ. Тарлас тесен мĕн ăша илсен лайăх-ши?

— Тарлас тесен-и? „Капкăн“ заметки пит пулăшаť. Кирек хăш çынна та сивĕ çанталăкрах тарлаттараť.

## Камайкассинче

**Колхозник:** Есĕр пирĕн колхоз канцељарине пырсан хăвăр сисмесĕрех пĕр-пĕр йапала илсе кайатăр.

— Мĕнле, чаплă йапала-и?

— „Чаплă“ çав—хăнкăласем.

**С. Павлăв.**

# Пыл йуратакансем

Моластӑв Иванпа Филимонӑв Макара пӗлетӗр-и есӗр? Ҫук, пӗлместӗр. Вӗсем Йелчӗк районӗнче, Аслӑ Йелчӗк йалӗнчи Ленин йалӗпе тӑракан колхозра пурӑнаҫҫӗ. Иккӗшӗ те должнӑҫра: пӗри хуртсен заведуйушчийӗ (пчеловод), тепри ҫав хуртсене хураллакан (сторӑж).

Ку колхозӑн улма сачӗ пысӑк. 4—5 гектара йахӑн вырӑн йышӑнат̆. Ҫав улма сатӗнче вӗсен хурт вӗллисем пӗр 100-ре йахӑн кӗрлесе лараҫҫӗ.

Кӑҫал ҫанталӑк уйартарах пулнипе хуртсем пыл нумайах тӑвайман. Анчах пчеловод Иванпа сторӑж Макар ҫапах пылсӑр чей ӗҫмеҫҫӗ. Вӗсемшӗн иккӗшиншӗн хуртсем, нумай мар пулсан та, пыл йатса пама ӗлкӗреҫҫӗ.

Колхоз председателӗ темиҫе хут та пчеловодран ыйтса пӗлнӗ:

— Ну, кӑҫал мӗнле, колхозниксене ӗҫкунӗ тӑрӑх кӑшт уйӑрса памалӑх пыл пур-и?—тесе.

— Колхозниксене ӗҫкунӗ тӑрӑх уйӑрса пама мар, пӗрре ларса чей ӗҫмелӗх те ҫук,—тесе ответлет Иван.

Председател пчеловод сӑмахне ӗненет. Ӗненмесӗр, вӑл вӗт вӗреннӗ ҫын. Икӗ уйӑх пчеловодсен курсӗнче вӗренсе тухнӑ.

Иванпа Макар кашни кун пылпа чей ӗҫеҫҫӗ.

— Асту, пыл пуррине никама та ан шарла. Ыттисене пулмасан та, пире ваҙҙи ҫитӗ,—тесе ҫирӗплетет пчеловод сторӑжа.

— Ухмах мар вӗт епӗ,—тесе пуҫне тайат̆ Макар.

Ҫапла пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн кунсем шуса ирteҫҫӗ. Хуртсем пӗчӗккӗн пыл тултараҫҫӗ. Иванпа Макар улма сачӗ сулхӑнӗнче пыллӑ чей ӗҫсе ҫеҫ вырҭаҫҫӗ. Колхоз ҫӑкӑрӗ хатӗр. Ӗҫкунӗ параҫҫӗ. Пурнӑҫ!

Пурӑнсан-пурӑнсан, Иванӑн пуҫне урӑх шухӑш пырса кӗрет:

— Макар!—тет вӑл.

— Мӗн?—тет леш.

— Пыл капла чейпе ӗҫсе, ҫӑкӑрпа ҫисе йӑлӑхтарчӗ. Атӑ, пыллӑ сӑра туса ӗҫер.

— Атӑ! Вӑт ухмахсем, тахҫанах ҫапла тумала,—тет Макар.

Шухӑшӗсем иккӗшӗн те пӗр. Иван килне кайса икӗ витре кӗрекен пичке йатса пырат̆. Макар шыв вӗретсе, хӑмла йарса, пылпа пӑтратса пичкене тултарса лартат̆.

Пичкере йӳҫет, хайхисем кашни кун чей вырӑнне пыллӑ сӑрана йанкӑртаттараҫҫӗ. Пӗр пичке пӗтнӗ ҫӗре тепри хатӗр. Макарпа Иван йурлайурла пыллӑ сӑрана ӗҫеҫҫӗ.

Хӗртсе хӗвел пӑхат̆. Колхозниксем тар йухтарса тырӑ пухаҫҫӗ.

— Мӗн ухмахланнӑ пирӗн пчеловодпа сторӑж,—кашни кун йурлаҫҫӗ?—тесе тӗлӗнеҫҫӗ хӑшӗ-пӗрисем.

— Кӑҫал пыл ҫук, ҫавӑнпа ӗҫӗсем те ҫук; ҫавӑнпа, ӗҫсӗр аптӑранӑ йенне йурлаҫҫӗ ӗнтӗ вӗсем,—теҫҫӗ теприсем.

Колхозниксен хушшинчен пӗр Хӗлимун йатлӑ колхозник чейерех. Вӑл пчеловодпа сторӑж ахаҙҙтен мар йурланине чухласа илет. Пӗрре ҫапла, сторӑжпа пчеловода систермесӗр, сата кӗрсе вырҭат̆ те, лешсем мӗн хӑтланнине асӑрхат̆. Вӑрах шухӑшласа тӑмаст̆. Лешсем ӗҫсе ӳсӗрӗлсе выртса ҫывӑрсан, пыллӑ сӑра пичкине йӑтат̆ те, вӑшт сатран тухса кайат̆.

Малтан Макар ыйхинчен вӑранат̆. Мухмӑрлӑ куҫӗсене тармакласа уҫат̆ те, тӳрех пичӗке патне пырат̆. Пӑхат̆ пичӗке ҫук.

— Иван! Сӑрана вӑрласа кайнӑ!—кӑшкӑрса йарат̆.

Пчеловод хӑраса сиксе тӑрат̆:

— Ӑҫта вӑрӑ?—ахӑрат̆ мухмӑрла сассипе.

Унта та, кунта та шыраҫҫӗ. Ҫук, пичӗкене тупаймаҫҫӗ.

— Тинех лекрӗмӗр! Тинех пыл пуррине пӗлеҫҫӗ ӗнтӗ,—хурлӑхлӑн калаҫса илет Иван.

— Сӑра мӗнле ҫӑва шӑтӑкне кӗрсе кайтӑр. Тинех мана ку ҫӑмӑл ӗҫрен хуса кӑларчӗҫ ӗнтӗ,—ӗсӗклесе макӑрат̆ Макар.

Ҫав вӑхӑтрах Хӗлимун урама йантратса йурласа пырат̆:

„Йурла, йурла кӑна сӑра ӗҫер-и,
Пыл ӗҫеҫҫӗ кусем теччӗр-и...“

— Мӗн ухмахланнӑ ку Хӗлимун. Халиччен нихҫан ӗҫменскер, ӗҫсе ӳсӗрӗлнӗ,—тесе шухӑшлат̆ колхоз председателӗ.

— Хӗлимун, ӑҫта ӗҫрӗн есӗ?—тесе ыйтат̆ председател.

— Пыллӑ сӑра ӗҫрӗм,—мухтанат̆ Хӗлимун.

— Ӑҫтан илтӗн?

— Ха-ха-ха! Пчеловодпа сторожӑн пыллӑ сӑрине пичкипех вӑрласа тухрӑм. Ӗҫессӳ килсен, атӑ, ӗҫтерем. Хӗрӗх градуслӑ ерех пек хӑватлӑ, пӗр курка ӗҫсенех пуҫа кайат̆,—тет Хӗлимун ахӑлтатса кулса.

Председател малтанах Хӗлимун сӑмахне ӗненмест. Хӗлимун йӗркипе ӑнлантарса парсан тин чухласа илет. Унтан председателпе Хӗлимун сата пыраҫҫӗ. Макарпа Иван пысӑк хуйха путса лараҫҫӗ.

Председател пчеловода вӗллесене пӑхма хушат̆: Пӑхаҫҫӗ: кашни вӗллерен 5—6 килограм пыл илеҫҫӗ.

Ҫапла пыл йуратакансене тӑрӑ шыв ҫине кӑлараҫҫӗ. Малашне ӗнтӗ вӑл пыл йуратакансем хаҙҙхи пек пыл нумай ҫийеймеҫҫӗ.

**М. Данилӑв—Чалдун**

---

## Ку аванах

— Ку прикашчик лайӑх пулчӗ.

— Мӗншӗн вара?

— Мӗншӗн тесен ун умӗнчи кайала тавӑрса пама икшерпе виҫшер пус укҫасем ҫук тетчӗ. Ку ун пек мар,—пӗрер пус ҫук, тет. **С. Павлӑв.**

## Таса мар алӑлӑ

Пӗри, йумӑҫ пӑхап текене аллине тӑсса кӑтартса, ҫапла ыйтрӗ:

— Манӑн ал йӗрӗсем тӑрӑх ман характӗр мӗнлине пӗлме пултарӑн-и?

— Пултаратӑп: есӗ супӑҥ тенине йуратмастӑн,—терӗ лешӗ.

# Йăларан чир çуралнă

Пĕлетĕр пулĕ ĕнтĕ есĕр, ытти хуласенчи екех, Йетĕрнере те районри пуштă уйрăмĕ пур. Ку учрежденин начаљникĕ пулса Сорокин йулташ ĕçлет.

— Генади Николайчă, — тесе чĕнеççĕ ăна хăйĕн сотрудникĕсем.

Кашни пуçлăхăннах йăли, кăмăлĕ, ăсĕ - пуçĕ, урнăçĕ хăйне майлă. Кам мĕнле пурăнма хăнăхинчен килет ĕнтĕ вăл. Пирĕн Генади Николайăн та хăйне майлă йăласем пур. Калăпăр, акă вăл пирусне çăвара чалăшшăнтарах хыпаť те, аллисене йĕм кĕсйине чиксе учреждени коридорĕ тăрăх уткаласа çÿреме йуратаť. Тепĕр чух тата:

— Кăхăм, кă-хă-ăм! — тесе тухман ÿслĕкĕпех хăй учрежденине пырса кĕнине систерет.

Вара сотрудникĕсем васкарах пуканĕсене йышăнаççĕ, аллисемпе ĕçлĕ пулса куç хÿрипе Геади Николайча шăтарса илеççĕ. Вĕсен те хăйĕн йăлисем пур. Йадрино салинчи пуштăна иленте унăн кăштах йăлара пурри палăраť. Вĕсем пуштăна, упа уттипе çÿретсе, кашни кунах кшер сехет ытларах йулса çитереççĕ. 2-мĕш Ирçери Фонтеркин пиçмоносцăн та хăйне йăла. Вăл хаçат подписчикĕсене кашни кунах чăрманармасť, хаçатсене икĕ-виçĕ куншăн пĕр харăс еçсе парса, пур çĕнĕ хыпара та пĕр кунта пĕлтерет. Акă тата Кăкшăм йалĕнчи „Иљйич“ йатлă олхозри Пахомăв та çав йăлара пуррипех, хаатсем илме Палтай пуштине хăйĕн вырăнне мăшне туйа тыттарса йараť. Анчах Палтай пуштинче те хăйне майлă йăласем. Унта пиçмоосцăсем хаçатсене тавлашса валеçме тытăнаççĕ е, вара Пахомăвăн амăшĕ нимĕнсĕрех колхоза аврăнаť.

— Хаçатсем килмен пайан,—тесе ответлет Паомăв ун пек чухне колхозниксене.

Çав йăласене пулах иккен Талуй колхозĕнчи читĕл Нигĕл йулташ:

— Ăçта çĕтертĕр есĕр манăн хаçатсене, район- „Колхозник йулташне“ çур çула йахăн илейестпĕр,—тесе вăрçса пурăнаť.

Лешĕ тата Тури Ачак пуштине ÿркенме маннă хатник вырăннех кăларса йанă.

— Ме сана маршрут, çÿре мĕн ывăнса ÿкичен,—тенĕ ăна. Ўркенмест лешĕ, пур пек кукăрене те йĕрлет. Вара Лапракасси йалсоветне, Палтайран тухсан иккĕмĕш кунне мĕнле пулсан а, çитетех. Анчах епĕр пĕлнĕ тăрăх сехетне çур ухрăм утакан мучи те Палтайран Лапракассине илĕк-ултă сехетре тухаť.

Аптрамала çав, уйăп пек телефонисткăсен те хăйен йăлисем пур. Калăпăр, есĕр телефон тăрăх ĕр-пĕр йалсоветпа çыхăнтарма ыйтатăр.

Вĕсем:

— Халех, халех, халех сире калаçтаратпăр,— еççĕ. Анчах „халех“ тенĕ сăмах миçе сехетрен ытăнса тăнине математикăн хаљхи саккунĕсемпе илĕштерме май çук, халех тени сехете те çитет, ртсе те кайаť, йе кайарах та йулаť. Куславкка олхозĕ хыпса тухсан „халех“ сăмах Йетĕрне ушарникĕсемшĕн çирĕм минут çине йулнă, телефон аппарачĕн авăри аран кăна чăтса тÿснĕ.

— Кашни йалсоветрах телефон пулмали халĕ йăлана кĕчĕ, çавна туса парăр пире, тата вĕсем лайăх ĕçлеччĕр, — тенĕ Йетĕрнери суйлавçăсем иртнĕ суйлавра.

— Сирĕн хусамăрăн, пирĕн хамăрăн йăла,—тенĕ Йетĕрне пуштинчисем.

Вара пуштăрисем хăйсемле ĕçленĕ; унта-кунта телефон йуписем лартнă та, ĕçе тăхтатнă.

— Телефон карма пралук çук, — теççĕ вĕсем. Йуписене ахалех лартнăшăн кăмăлĕсем хуçалнă, тарăхса, тайăлса пăхма пуçланă.

— Маншăн мĕн, епĕ ĕçрен тухатăп вĕт,—тенĕ монťор Крылов. Вара телефон аппарачĕсем те:

— Пирĕншĕн те пурĕ пĕрех, калаçмасан та пултаратпăр,—тенĕ клийентсене.

Каларăмăр вĕт-ха, йăласем пĕр пек пулмаççĕ, тесе. Пирĕн пуштă начаљникĕ калаçнине итлестăк, хăлху кăна шăхăртăр. Унăн çăварĕнчен кашни минутрах çĕр те пĕр катăк сăмах тухаť. Районри радиоуполномочĕннăй Горкă Аникин та халаплама тайлăк мар, ăна хирĕç сăмах хушма та ĕлкĕрейместĕн есĕ. Анчах радиосем тăк, вуççех вĕсене кура мар, 60 йахăн радиоточкă чăрт сăмах та кăлармаççĕ. Мĕн темеле кăна? Йăла тес, йăла мар, „чăптаракан“ чир мар-ши вăл? Чăн та çавăнтан пырса тухаť иккен ку ĕçĕн туппи. Калăпăр, йăлара пур пуçлăхсем радиоран та аван палканă. Вара мĕн тетĕр-ха, ĕçсем сăмах айне пулнă, ĕçсене йăла чирĕ сырса илнĕ. Йăларан — йăла чирĕ çуралнă. Вăл Йетĕрнери пуштăра аталаннă, кашни тымарнех йарса илнĕ. Хирĕçлеççĕ пулĕ-ха ăна Йетĕрнери „врачсем“:

— Мĕн калаçатăр есĕр, ун пек чир çук пирĕн, йатне кăна илтетпĕр, — тейĕç.

Епĕр вĕсене:

Чирĕ пур, вăл пуштăра, есĕр сыватăр,—тетпĕр.

**Ник. Пушкин.**



— Санăн упăшку мĕн йатлă?
— Макар Макарчă.
— Мĕн ĕçлесе пурăнаť вăл?
— Манпа çапăçса.

# ТУХАТМĂШ

*И. Персонăв*

**(А. П. Чехăв калавĕ тăрăх çырнă пĕр пайлă инсценировкă)**

*РСФСР Реперткомĕ сценă çинче лартма ирĕк панă.*

ВЫЉАКАНСЕМ:

Раисă Нилăвнă—чечук майри.

Савели—чечук.

Почтаљйон.

Йамшăк.

Ку ĕç манăçа йулнă помешчик именийĕ çумĕнчи чиркӳ хурал пӳртĕнче пулса иртет. Сулахай йенче пĕртен-пĕр пĕчĕк чӳрече курăнаť. Ун патĕнче сĕтел, тата икĕ пукан. Шалахра—краваť. Краваťрен кăмака патне кантра карнă, ун çинче тĕрлĕ кипкесем çакăнса тăраççĕ. Сылтăмра—алăк.

Çĕрле. Тулта куç-пуç курми тăман çавăрттараť, мăрйере çил улаť. Чӳрече патĕнче, хыççăр пукан çинче чечук майри—Раисă Нилăвнă лараť. Шуçран тунă лампă унăн кĕлеткине, тата урайне çитийех усăнса аннă хулăм çивĕтне çутаťаť. Раисă шултăра пиртен михĕсем çĕлет, сайра-хутран пуçне çĕклесе çилтăман шавне итлет. Темĕн пысăкăш вырăн çинче Савели выртаť. Тĕрлĕ татăксенчен çĕленĕ, варланса пĕтнĕ çивиттин пĕр вĕçĕн айĕпе унăн пылчăклă урисем курăнаççĕ, тепĕр вĕçĕнчен—хĕрлĕ хытă çӳçĕсем шăртланса курăнаççĕ. Чечук Раисă çине хăрарах, асăрханарах пăхаť, çил уланине итлет те, кăмăлсăрланаť.

Савели (*пӳрнипе йунаса мăкăртатаť*):—Еп пĕле-е-тĕп! Еп пĕтĕмпех пĕлетĕп!

Раисă пĕр михне çĕлесе пĕтерсе ăна айакала ываťаť, унтан тутлăн карăнса, чӳрече çине тинкерсех пăхаť.

Савели:—Кил, вырт!

Çил пĕрешкел уласа тăни витĕр шăнкăрав сасси хуллен кăна илтĕнет. Раисă иглет.

Савели (*пуçне çивитти айĕнчен кăларса, Раисă мĕн тунине сăнаť*):—Мĕн?

Раисă: — Нимех те мар... Такам иртсе килет пулас...

Каллех шăнкăрав сасси илтĕнет.

Раисă: — Илтетĕн-и?

Савели (*çивиттине сирсе пăрахаť те, вырăн çинчех чĕркуççи çине тăрса, Раисă çине пăхаť*).—Почтă ку...

Раисă (*сывласа илсе*):—Турăçăм, çакнашкал çанталăкра йепле çӳрес килет-ши?

Савели:— Хысна ĕçĕ вăл. Килсен-килмесен те çӳрес пулаť... Иртсе карĕ! (*Выртаť, анчах каллех сиксе тăраť, итлет, Раисăна сăнаť*). Илтĕнмест... (*Шăнкăрав уççăнах йанранине итлесе вырăн çинчен сиксе анаť, çара урисемпе урай тăрăх çатлаттарса çӳрет, хăрлатса Раисă çине чалăшшăн пăхаť*). Почтăна çавăрттараť, тетĕп. Илтетĕн-и ес? Почтăна çавăрттараť, тетĕп! Еп... еп пĕлетĕп. Еп мĕн... ăнланмастăп-и? Еп пурне те пĕлетĕп, çĕр çăтманскер!

Раисă (*куçĕсене чӳрече çинчен илмесĕр*):—Мĕн пĕлетĕн ес?

Савели: — Ак мĕн пĕлетĕп: çак вăл пĕтĕмпех сан ĕç, шуйттан арăмĕ. Сан ĕç, çĕр çăтманскер! Çак çил-тăманта, почтăна çавăрттарни те... пурне те ес тунă çавна. Есĕ!

Раисă (*лăпкăн*): — Аташатăн çав, айван!

Савели: —Еп сана тахçанах асăрхатăп. Санра йытă йунĕ пуррине авлансан тепĕр куннех сисрĕм.

Раисă: — Ťфу! Сăх-сăхса ил, тăмпуç!

Савели (*кĕпе арки ăшне сăмсине шăнкартс макăрас пек калаçаť*): — Тухатмăш тăк тухатмă шах ĕнтĕ. Ес ман арăм пулин те, пуп тавраш пулин те, еп çапах та ес кам пулса тăни çинче такам умĕнче те каласа пама пултаратăп... Йепле ха тата? Тур пулăшсамах мана, тур çырлахса мах! Пĕлтĕр Данил пророкпа виçĕ çамрăк ач праçникĕ умĕн çавнашкалах тăман пулчĕ те-мĕн-ха? Маçтăр ăшăнма кĕчĕ. Кайран турă çынн Алексçей праçникĕ умĕн шыв тапранчĕ те, урет ник çитсе тухрĕ... Çĕрĕпех санпа палкарĕ, пуť сĕрскер,—ирхине тухсан вара еп ун çине пăхрă та, унăн куç харшисем усăнса тăраççĕ, пичĕ ту тăнса ларнă. Е? Сăпасра икĕ хутчен тăвăл пул чĕ, икĕ хутĕнче те ухатник çĕр выртма килчĕ.. Еп пĕтĕмпех курнă, çĕр çăтманскер! Пĕтĕмпех Е, ракран та хĕрлĕрех пулса карăн-и? Аха!

Раисă: — Нимĕн те курман есĕ...

Савели: — Çапла пулмасăр. Кăçал хĕлл тата, раштав умĕн, Критри вунă мученик праç никĕ чух, кунĕ-çĕрĕпе çил-тăман пулсан.. астăватăн-и? Предводителĕн писăрĕ çул çухатса кунта килсе кĕчĕ, йытă... Мĕне ăмсаннă та. Ťфу писăре ăмсаннă. Ара, çав усалшăн турă çанталăк не пăсма кирлĕ пулнă пуљ. Упăте вĕт вăл, йĕп сăмса, çĕр çумĕнчен курăнмасť, пичĕ тулл шатра, мăйĕ кукăр... Хитре пулсан татахч атту—ťфу!.. Çăвапуç! (*Каллех шăнкăрав сасси илтрĕ*). Халĕ те çавах. Почтăна ахаљ мар çавăр тараť. Почтă сана шырамасť пулсан, куçран су мана. О, арçури хăйĕн ĕçне пĕлет, лайăх помош ник. Ак, çавăрттараť-çавăрттараť те, кунт илсе килет. Пĕле-етĕп! Кура-атăп! Пытараймăн арçури мăйраки, шуйттан кăмăлĕ! Çил-тăма пуçлансан сан шухăшсене тӳрех пĕлтĕм епĕ.

Раисă (*кулса*): — Пулаť те çав ухмах! Са ухмах шухăшупа, çанталăка еп пăсатăп-и вара?

Савели: — Хм... Кулах-ха. Ес-и вăл, е мар-и, анчах асăрхатăп епĕ: санăн йун выљам пуçласанах — çанталăк пăсăлаť, çанталăк пăсăл сан вара йепле те пулсан ăссăр çынна кунт илсе килет. Кашнинчех çапла пулаť. Çавăнпа т есех тăватăн çавна. О, пуťсĕр етем! О, шуйтта тавраш! Ес чăнах та тухатмăш мар — ете пулсан, хăвăн пуçупа çакна шухăшласа тупмал лешсем маçтăр та мар, ухатник та мар, писăр т мар—вĕсен сăнĕпе килнĕ арçури пулсан—мĕ тумала? Е? Шухăшласа пăхасчĕ санăн!

Раисă (*упăшки çине хĕрхенӳлĕн пăхса*): — А ухмах та çав есĕ, Савели! Атте виличчен, кунт пурăннă чух, пирĕн пата силлекен чиртен сыва ма темĕн чухлĕ халăх çӳретчĕ: йалсенчен т выçăлкăсенчен те, ермен хутăрĕсенчен те киле чĕç. Кашни кулленех килетчĕç, анчах вĕсен никам та арçури темен. Халĕ пирĕн пата çулт лăкра пĕрре, çанталăк пăсăлсан, кам та пули

…шăнма кĕрет те—ес ухмах пуçупа тĕлĕнетĕн, …анăн тĕрлĕ шухăш сиксе тухать.

Савели: (*шухăша кайать, анчах часах, ĕнен…енниpermanent, пуçĕпе суллать*).—Ваттисем, чалăш-тĕлĕш …ынсем пулсан—татахчĕ, анчах йалан çамрăксем …ĕр выртма кĕреççĕ. Ăшăнаççĕ çеç пулсан та—…имех те марччĕ, атту шуйттана ашкăнтараççĕ …ĕт. Çук, арăм, çак тĕнчере сирĕн хĕрарăм …ăхĕнчен чейи пĕр чĕрчун та çак. Чăн-чăн ăс …ирĕн пĕр тумлам та çук, шăнкăрч ăсĕнчен те …ахалтарах, анчах аскăн чейелĕхĕ—у-у-у!—тура…мĕш çырлахтăрах! (*Шăнкăрав сасси çывхарнине …итлет*). Ав, почта шăнкăртаттарать. Çил-тăман хаљ çеç пуçланнă-ха, анчах еп санăн пур шухă…шусене те пĕлсе тăратăп. Тухатса лартрăн ĕнтĕ, …ерешмен карчăкĕ!

Раисă (*михĕсене çĕрелле ывăтса сиксе тăрать …те, Савели йенеле пырать*): — Мĕн çыпçăнтăн ман …умма, есрелĕ? Мĕн сăмала пек çыпăçса лартăн?

Савели (*хăранипе çивиттипе витĕнсе выртать …те, Раисă каллех хăй вырăнне кайса ларасса кĕтсе …илет*):—Акă ма çыпăçăнтăм... Кĕçĕрхи кас мĕн те …пулин пулсан, тур çырлахтăрах, мĕн те пулин …пулсан... итле есĕ... тем пулсан, ыран ирех …Дйакăвă салинĕ Никодим атте патне кайса пĕ…тĕмпех каласа паратăп. Çапла-çапла, Никодим …атте, каçарăр тархасшăн, анчах вăл тухатмăш, …тетĕп. Мĕншĕн? Хм... Мĕншĕнне пĕлес килет-и? …Тархасшăн, итлĕр... Çапла та çапла. Пĕтетĕн …вара, арăм! Страшнăй сутра çеç мар, ку пурнăç…ра та асаплантараççĕ сана. Ахаљрен мар сирĕн …пеккисем пирки требникре молитвăсем çырнă.

Чӳречерен хыттăн шаккаççĕ. Савели хăранипе хутлансах …ларать. Раисă сиксе тăрса чӳрече патне чупса пырать.

Почтаљйон (*чӳрече хыçĕнче*): — Туршăн та …пулин ăшăнма кӳртĕр! Кам пур кунта? Хĕрхенĕр …тархасшăн! Çул çухатрăмăр.

Раисă: — Камсем есĕр?

Йамшăк (*чӳрече хыçĕнче*): — Почтă!

Раисă васкасах хулпуççинчен шаљ ургса лампă тытать те …çенĕке тухать.

Савели:—Ахаљрен мар шуйттан арăмĕ! Çап…лах ĕнтĕ. Еп каланийех тĕрĕс пулчĕ... Ну, асту …еп сана!

Раисă йенеле чышкипе йунаса илет те, пичĕпе çтена йе…неле çавăрăнса, çивиттипе пуç çинченех витĕнсе выртать.

Часах, Раисă йертсе пынипе, сторăж пӳртне почтаљ…йонпа йамшăк кĕреççĕ.

Йамшăк: — Йапалисене те йатса кĕрес-и?

Почтаљйон (*йура силлесе тасатать, ăшăнма тăрăшать*): — Унта хăвармала мар ĕнтĕ вĕсене.

*Йамшăк тухать.*

Почтаљйон (*шăнса кайнă аллисемпе башликне салтма тăрăшать, анчах салтаймасть, çавăнпа та картусĕпе пĕрлех пуçĕ çинчен сĕвсе илсе кăмака патнеле ывăтать*):—Йытăла пурнăç! Чутах пĕтеттĕмĕр. Сирĕн çутта курман пулсан тем пулаччĕ-ха... (*Паљтоне хывса, ăшăнмашкăн калле-малле утса çӳрет*). Мур пĕлет ăна, тахçан чарăнать вăл! Ку йытăла пурнăçăн вĕçĕ-хĕрри те çук! (*Сторăж пӳртне пăхса çавăрăнать*). Ăçта килсе кĕтĕмĕр епĕр?

Раисă (*картах сикет, хĕрелет*): — Гуљайĕвски сăрт çине, Калиновски генерал именине.

Почтаљйон: — Е-ех, ăçта килсе тухнă... (*Кĕрекен йамшăка*). Илтетĕн-и, Çтапан? Епĕр Гуљайĕвски сăрт çине килнĕ...

Йамшăк (*сăран михĕ илсе кĕрет*): — Нда!.. Инçе!

Тухать те, часах тепĕр пĕчĕкрех михĕ, тата почтаљйон хĕçне илсе кĕрет, унтан чĕлĕмне тултарса, ăна туртма çенĕке тухать.

Раисă (*почтаљйона*):—Тен, шăнса килнĕ хыçсăн чей ĕçетĕр-и?

Почтаљйон (*михĕ çине ларса, кăмака умĕнче урине ăшăтать*):—Ăçтан чей ĕçсе ларатăн унта. Часрах ăшăнмала та малала каймала, унсăр почтă пуйĕсĕнчен йулма пулать. Пĕр вунă минут ларăпăр та кайăпăр. Анчах есĕр тархасшăн пире çул кăтартса йарăр!..

Раисă: — Турă асап кăтартать çав ку çанталăкпа.

Почтаљйон: — Çапла! (*Хаљ çеç Раисă çине интереспа пăхма тытăнать*). Есĕр хăвăр кам пулатăр кунта?

Раисă: — Епĕр-и? Кунтисем, чиркӳ çумĕнче пурăнакансем... Епĕр чиркӳ тавраш çыннисем... Авă, манăн упăшка выртать. Савели, тăр ĕнтĕ, килсе алă тыт. (*Савели çивиттипе тата ытларах чĕркенет*). Кунта ĕлĕк прихут пулнă, анчах пĕр çултаăк та çурă кайала ăна пăрахăçа кăларчĕç. Паллах ĕнтĕ, кунта улпутсем пурăннă чух—çынсем те пулнă, прихут тытма та май пулнă, анчах халĕ, улпутсемсĕр пуçне, хăвăрах шутласа пăхăр, пуп тавраш ĕн мĕнле пурăнмала? Марковкă тенĕ чи çывăх йал та кунтан пилĕк çухрăмра. Хаљ Савели заштатнăй та... сторăж вырăнче тăрать. Ăна чиркĕве пăхса тăма хушнă. Вăл генерал майринчен преосвешеннăй патне çыру ыйтса илнĕ пулсан, ăна аван вырăн пама пултарнă. Анчах вăл пит кахал, тата çынсенчен те хăрать... Çапах та, епĕр пур-пĕрех духовнăй йатра тăратпăр.

Почтаљйон: — Мĕнпе пурăнатăр-ха есĕр?

Раисă: — Чиркӳ çумĕнче çаранпа пахчасем пур. Анчах, пире унтан сахал тивет. Дйакăвăри Никодим атте—пит выçлăх куçлăскер; çулахи Микулăнпа хĕллехи Микулăнра кунта килсе служить тукалать те, çавăншăн пĕтĕмпе тенĕ пекех хăйне ваљљи илсе кайать. Хута кĕрекен çук.

Савели (*сиксе тăрса, хайаррăн*): — Суйатăн! Никодим атте–таса чун, чиркӳ çынни, вăл илет пулсан та — устав тăрăх çеç. (*Каллех çивиттипе чĕркенсе, пичĕпе çтена патнеле выртать*).

Почтаљйон (*Раисăна кулса*): — Йепле хайар вăл санăн! (*Çывăхарах пырса*). Ес качча кайни нумай пулать-и?

Раисă (*именсе*): — Иртнĕ вырсарни кун тăватă çул çине карĕ. Кунта ĕлĕк манăн атте чечукра пурăннă. Унтан, вилме вăхăт çитсен, вырăнĕ хамăртах йултăр тесе, конçисторине кайнă та, мана каччă вырăнне пĕр-пĕр хусах чечука йама ыйтнă. Еп качча карăм вара.

Почтаљйон: — Е, апла пулнă иккен... (*Савелине*). Еппин, ес пĕре çапсах ик шăнана вĕлернĕ: вырăн та илнĕ, арăм та туйаннă.

Савели тӳсеймесĕр урисене хăварт хускатса илет те, çтена çумнерех сиксе выртать.

Почтаљйон (*пĕр вăхăт Раисă çине пăхса килленсе тăрать, унтан тарăнăн сывласа илсе, хăйĕн михĕсем патне пырать*):—Йытăла пурнăç!.. (*Михĕсем çине паљто сарать те, тутлăн анавласа выртать*).

Усал тăшмана та кун пек пурнăç сĕнессĕм çук...

Сторăж пÿртĕнче шăпах пулаŤ. Çывăрса кайнă почтаљйон пĕр пек лăпкăн сывлани çеç илтĕнет. Ун патне Раисă вăрахăн пырса тăраŤ. Пукан çине ларса, вăл почтаљйон çине нумайччен пăхаŤ. Паузă.

Савели (*çивитти айĕнче йăшăлтатса, майĕпе çавăрнаŤ те, хуллен калаŤ*): — Мĕн пăхатăн?

Раисă (*кусне почтаљйон çинчен илмесĕрех, шăппăн*): — Сана мĕн? Вырт есĕ!

Савели хайаррăн тулхăрса илсе, сасартăк çтена йенеле çавăрăнса выртаŤ. Анчах кăшт вăхăт иртсенех. вăл вырăн çинчен пăлханулăн çĕкленет, чĕркуççи çине тăраŤ, вара минтерсем çине чавсаланса, Раисă çине чалăшшăн пăхаŤ. Паузă. Савели ĕсĕрсе илет, вырăн çинчен хырăмĕпе шуса анаŤ те, почтаљйон патне пырса унăн питне тутăрпа витсе хураŤ.

Раисă: — Ма апла турăн?

Савели: — Ун куçĕнчен çутă çапасран.

Раисă: — Ес çуттине пачах сÿнтер еппин.

Савели (*лампăнă сÿнтерме тутине тăсаŤ, анчах шухăшласа илсе, аллисемпе çупса илет*):— Ку вара шуйттанла чейелĕх мар-и? Е? Хĕрарăм йăхĕнчен чейерех чĕрчун пур-ши вăл? (*Тархăпа сураŤ те, вырăн çине кайса выртаŤ*).

Раисă (*шăппăн*):—Ех, вăрăм аркалă йавăл! Тăхта еп сана.

Паузă. Раисă малтанхи пекех почтаљйон çинчен куç илмест.

Савели (*вырăн çинчен хăейăрт тăрса, çăмат тăхăнаŤ*): — Еп вăрăм аркалă пуŤсĕр çын пулсан та, вĕсен кунта çывăрмала мар!.. Çапла... Вĕсен ĕçĕ—хысна ĕçĕ, вĕсене кунта тытса тăнăшăн хамăрăннах ответ тытмала пулаŤ... Почтăпа кайатăн пулсан—кай, ан çывăр!.. (*Тумланнă май çенĕкеле кăшкăраŤ*). Ей, есĕ! Йамшăк, мĕн йатлă çав ес? Сире ăсатса йарас-и? (*Почтаљйон патне киксе пырса*). Тăр, почтăпа çывăрма йурамасŤ.

Почтаљйон вăранмасŤ, çавăрăнса выртаŤ.

Савели: — Ей, ваше благороди! Кайас тăк — кайас пулаŤ, кайас мар пулсан — урăхла вара... Çывăрни йурăхлă мар!

Почтаљйон сиксе тăраŤ, пăтранчăк куçĕсемпе сторăж пÿртне пăхса çавăрăнаŤ те, каллех çывăрма выртаŤ.

Савели: — Хăççан кайатăр-ха тата? Вăхăтра çитмешкĕн почтă та ĕнтĕ вăл. Илтетĕн-и? Еп ăсатса йарăп сире.

Раисă (*вăраннă почтаљйона*): — Ну, ăçта каймала ĕнтĕ çак çанталăкра? Çывăрасчĕ хăвăр сывлăхушăн!

Савели (*çĕтĕк кĕрĕкне хăвăрт тăхăнаŤ*): — Почтă мĕнле тата? Почтăна кам илсе кайаŤ? Ес илсе кайатăн-и мĕн? Есĕ-и?

Почтаљйон (*Савели кăмăлне ăнланса, анаслакаласа тăраŤ*): —Тепĕр пилĕк минут çывăрасчĕ... Пур-пĕрех кайа йултăмăр...

Йамшăк (*кĕрсе*): — Тен, шăпах вăхăтра çитĕпĕр. Кам пĕлет, тен пирĕн телейе пуйĕсĕ те кайа йулĕ. (*Çĕртен михĕ çĕклесе, Савелийе калаŤ*). Пулăш ĕнтĕ?

Савели пуçне кипкесемпе чĕркесе, тата çийелтен çĕлĕк тăхăнса, йамшăка йапаласене çĕклесе тухма хавассăнах пулăшаŤ. Иккĕшĕ те тухаççĕ. Почтаљйон хăйĕн башлыкĕн тĕввине кахаллăн салтаŤ.

Раисă: — Чей ĕçмелеччĕ...

Почтаљйон: — Еп ĕçĕттĕм те... вĕсем каймă хатĕрленчĕç. Пурĕ-пĕрех кайа йултăмăр.

Раисă (*çĕреле пăхса, ăна çаннинчен тытса, шăппăн калаŤ*): — Есĕр пурпĕр йултăр!

Почтаљйон (*ним тума пĕлменнипе, башлыкне хул урлă çакрĕ*). Йепле мăй санăн... йепле мăй... (*Раисăна хуллен тĕкĕнет, вăл хирĕçменнине курса унăн мăйне, хулпуççисене ачашлаŤ*). Йепле аван!

Раисă: — Йулăр ĕнтĕ... чей ĕçмелеччĕ.

Йамшăк (*урамра кăшкăраŤ*): — Ăçта хуратăн? Ес, улма нимĕрĕ! Урлă хур!

Раисă (*почтаљйон çумне йăпшăнса*): — Йулма лаччĕ... Ав, çанталăк йепле улаŤ.

Почтаљйон алăк çине пăхса илсе, Раисăна пилĕкĕнчен хăвăрт ыталаŤ, унтан лампăна сÿнтерме тутине тăсса пĕшкĕнет, анчах çав вăхăтра çенĕкре ура сассисем илтĕнеççĕ те алăкра Йамшăкпа Савели курăнаççĕ.

Йамшăк:—Пурте хатĕр! (*Иккĕмĕш михĕ çĕклесе тухса кайаŤ*).

Почтаљйон (*Раисă çине йулашки хут пăхса илсе, пуçне хыттăн сулласа илет те, йамшăк хыççăн утаŤ, Савели çине кăшкăраŤ*):— Аŭта, лар, çул кăтарт!

Иккĕшĕ те сторăж çуртĕнчен тухса кайаççĕ. Пĕччен йулнă Раисă халљ çеç тухса кайнă почтаљйон хыçĕнчен нумайччен пăхса тăраŤ. Тултан шăнкăрав сассине илтсен, вăл чÿрече патне чупса пыраŤ те, шăнкăрав сасси илтĕнми пуличченех касхи тĕттĕмлĕхе пăхса тăраŤ. Унтан вырăнтан тапранса, кĕтесрен-кĕтессе пăлханса çÿрет. Унăн сăнĕ курăйманлăхпа тулаŤ, вăл хăвăрттăн сывлаŤ, куçĕсем хайар тарăхнă çуттипе йалкăшаççĕ, çак пĕчĕк пÿртре уткаланă май вăл хăйне хĕртнĕ тимĕрпе хăратакан тигăр пек пулса тăраŤ. Пĕр самантлăха чарăнса тăрса, вăл хăйĕн пÿрчĕн ăшчиккине йĕри-тавра пăхса çавăрăнаŤ. Унăн сăнĕ вăл пуринчен те йĕрĕннине кăтартаŤ. Унтан вăл кантра çинчи кипкисене вăркăнтараŤ, вырăн çинчи çивиттисемпе минтерсене пур йенеле ывăтаŤ, — вăл çак пур йапаласенчен те тусан туса тăкма хатĕрри курăнаŤ... Йулашкинчен, ывăнса çитсе, вăл вăрăмăн макăрса йарса краваŤ çине ÿкет.

Сценă хыçĕнче чиркÿ йуррисене йурлани илтĕнет. Кăмăлне тулгарнă Савели кайала кĕрет. Урайне сапаласа пĕтернĕ йапаласене курсан, вăл Раисă çине чалăшшăн пăхса, йурлама чарăнмасăрах, пурне те пуçтарса малтанхи пек вырнаçтараŤ.

Савели (*мăшкăллăн калаŤ*): — Ахалех тухатрăн: пурĕпĕр карĕ... (*Выртма хатĕрленсе вăрахăн саланаŤ*). Ыран акă Никодим аттене есĕ мĕнле арăм пулни çинчен ăнлантарса паратăп-ха.

Раисă (*Савели йеннеле хăйаррăн çавăрăнса*): — Сана вырăн та çитĕ, арăмна хăвна валљљи вăрманта шыра. Мĕнле арăм еп саншăн. Çурăлса кайасчĕ санăн. Çыхланчĕ ман пуç çине тунката, ыйхă муклашки, — каçар мана, турă!

Савели (*шиклĕн*): — Ну, ну!.. Çывăр ĕнтĕ!..

Раисă (*макăраŤ*): — Телейсĕр епĕ. Ес пулман пулсан, тен епĕ пĕр-пĕр купцана, йе ыр йатлă çынна кайнă пулăттăм. Ес пулман пулсан, еп упăшкана йуратăттăм. Йур айне те пулмарăн есĕ, мăн çул çинче те шăнса вилмерĕн, пуŤсĕр! (*Вырăн çинче йĕрет*).

Савели (*арăмĕ макăрма чарăнсан шиклĕн, хуллен, Раисăна канçĕрлесрен хăраса, вырăн çине хăпараŤ. МăкăртатаŤ*). Тухатмăш! Ŭфу, ирсĕр!

Вырăн çинче качака сухалне чĕпĕткелесе, нумайччен Раисă çине пăхаŤ. Раисă пĕтĕмпех лăпланса çитсен, тикĕссĕн сывлама тытăнсан, пÿрнипе унăн ĕнсинчен тĕкĕнсе, хулăм çивĕтне аллине тытса, ун çине тулли кăмăлпа пăхаŤ. Раисă сывăрса кайнă пуљ тесе шутласа, вăл хăйуланаŤ те, арăмĕн мăйне ачашлама туртăнаŤ.

Раисă (*сасартăк çавăрăнса, Савелийе чавсипе сăмси урлă çапаŤ*):—Кай.

**Леонид Агакăв куçарнă.**

# Пулни-иртнисем

* * Аслă Тукаленчи „Большевик“ колхоз (Çĕрпӳ р.) коньухĕ Николайĕв Йаккăв кăçал питех те пысăк йапала çухатнă: хăйĕн ĕçĕсемшĕн тытас ответлăха çухатнă, 227 пăт лайăх йасмăка çĕртнĕ. Çав çĕрĕк йасмăка çитернипе 2 лаша вилнĕ. Ăна ытти лашасем те: ку йасмăкран: „головотяпство“ шăрши кĕрет тесе пулас çийесшĕн мар.

* * Çĕрпӳ районĕнчи „Вулкан“ колхозра (Аслă Тукай йалсовечĕ) „лаша манăн, ытти колхозниксен хамăн лашапа ĕçлеме памастăп“ тенĕ сăмахсене калама кашни колхозниках йуратать. Колхозник Никифăрăв Федăр „манăн“ тесе хисеплесе пурăннă лашине бригадир Кириллăв жнейкăпа вырма илесшĕн пулнă. Лешĕ, парас мар шутпа, чĕлпĕртен питĕ хытă туртнă та, чĕлпĕрĕ хăрăк пулнă пирки, хăй çĕре, йуман каска ӳкнĕ пек, тăсăлса аннă. Вара çапах та бригадир Кириллăв лашана илсе кайайманни çинчен пĕлтĕмĕр, анчах вăл колхозра хăçан „ман лаша“ тенĕ сăмах пăраха́ça тухассине пĕлейменĕмĕр.

* * Çĕнĕ Чураш (Йĕпреç р.) йалсовет членĕ Пашков хырăмне ерех кĕрсе тулнă. Ерехĕ илĕрттнипе Пашков „Майак“ ертелĕ председателĕн — Лермăнтăвăн сăмсине шăлпа çыртса татнă, Лермăнтăва пирвайхи пулăшу пама чĕнсе пынă Алексейĕв хвершăла айак пĕрчи шăммисене хуçса пирвайхи пулăшу памала туса йанă. Çав вăхăтрах патшалăха çуртри тăратас плана çентăберĕн 10-мĕшĕ тĕлне те йединоличниксем 65 процент çеç пурнăçланă. Пашкова йатламала туса, пирвайхи пулăшу парсан аван пулĕччĕ.

* * Çĕрпӳ районĕнчи „Етна“ колхоз председателĕ Соколов йултăшăн ревизи хыççăн 980 килограм ыраш, 2040 килограм сĕлĕпе викă тухман. Тырă типсе çавăн чухлĕ хухнă-ши, йе ăна йĕке хӳресем çисе йанă-ши? Йĕке хӳресем миçе уралисем-ши?—Пирĕн çавна пĕлмесĕр йулас килмест.

* * Уйкасри (Елĕк р.) Буденный йачĕпе тăракан колхоз йапăххи çинчен çырма кирлĕ-ши? Лаша хатĕрĕсем (хăмăт, ĕнерчĕк, тилхепе) çителĕксĕр пирки унти мĕн пур лашасене пĕр трук кӳлсе тухма май çукки çинчен çырса пĕлтернине лашасем йуратас çук. Тырă уйĕсенче тăккаланчăк нумайăн çинчен çырнине кураксемпе чанасем йуратас çук. Сĕлĕ çĕмелĕсем çăмăр айĕнче шӳсе ларнипе шăтса тухса тепĕр хут çитĕннине колхоз председателĕ: „ку вăл пирĕн колхоз çитĕнĕвĕ“ тесе калассăн туйăнать.

* * Çĕнйал Йавăш йалĕнчи (Вăрнар р.) комсомол организацине ăçта курма пулассине йалта никам та пĕлекен çук (нихăш кампанийĕ те хутшăнса ĕçлемест, февральтен пуçласа пайанхи кунччен пĕр пуху та туса ирттермен). Ăçта шырамала-ши вăл организацийĕ: кăмака хыçĕнче-ши, йе вăл çуллахи шăрăхра пăс пулса сывлăша тухса кайнă-ши?—пĕлтерсен аванччĕ.

* * Чекалинкă колхозĕнче (Куйбышĕв крайĕ, Похвиçнĕ районĕ) клуб кунĕн-çĕрĕн питĕрĕнсе тăрать. Питĕрмесен, çынсем кĕре-кĕре тухнипе клубăн тахçантанпа çуман урай хăмисем тата ытларах хуралса ларасран хăраççĕ пулмала. Клубăн çывăракан пуçлăхне сăмси шăтăкĕнчен чăх тĕкĕпе кăтăкласа вăратса, çак халĕ епĕр çыракан заметкăна вулаттармала.

* * Тĕрлĕ çын тĕрлĕ ĕçе, тĕрлĕ йапалана йуратать. Пĕри çăра салма йашки, йе çулă пăтă, тепри çăмăл ĕçе, тепри тата мĕне те пулин йуратать, т. ыт. те.

Кив Йахаль колхозĕнчи (Исаклă р.) Тихăнăвăн та йуратнă ĕçĕ пур. Вăл кирек хăçан та, кирек ăçтала каймала пулсан та, трантас кӳлнĕ йăрпа вĕçтерсе çӳрет. Бригадăра лашасем урăх ĕçре кирлине пăхмасăр, коньухсем патне „Приставить шерепцу неметленă“ тесе кулленхи стандартлă хутне çырса çеç йарать. Коньухсем каларĕш, вăл „ĕлĕк патшасем те çуран çӳренĕ çĕре“ çеç çуран çӳрет пулать.

Тихăнăв бригадир йалан лашапа çӳресен, утма манса кайасран хăрамасть-ши колхоз правленийĕ?




**Пахчаçимĕççойуз çынни.** — *Мана критиклесе кĕрхи йăвăççем çӳлçисемпе пăшăлтатаççĕ пулмала.*

# Електропатефон

Шĕнер йалĕнчи (Çĕрпӳ р.) йалпо правленийĕн пуçлăхĕсем пĕр хаçатра, пĕлтерӳсем пичетлекен вырăнта „електропатефонсем сутаççĕ“ тенине курнă.

— Давай илес! Хаклă мар вĕт — 350 тенкĕ çеç. Електро! — кăшкăрса йанă вĕсенчен пĕри.

— Ара, илмесĕр. Халĕ куљтурă таварĕсемпе сутă тума хушаççĕ. Ку чăн-чăн куљтурă таварĕ, тенĕ теприйĕ.

— Вăл каланă чух çутатса лараť тет, — хутшăннă виççĕмĕшĕ.

— Илес! Илес! — тенĕ пурте.

Часах Мускава заказ çырса йанă.

— Ну, пулаť ĕнтĕ пирĕн, — хĕпĕртенĕ хăйсем. Пирĕн пекки районĕпе те пулмасť вĕт. Елек-тро-па-те-фон! Мĕнлерех йанраť вăл. Килсен лартатпăр правленине, калаť те, çутă та параť. Кăтартапăр пурне те — мĕнлерех епĕр куљтурă таварĕсемпе сутă тунине.

***

Мускаврa нумай кĕттермен — часах йанă. Йалпорисем ним тума пĕлмен патефона илсен — пĕчĕк ачасем пекех хĕпĕртенĕ вĕсем. Çавăркаласа, аллисемпе тĕккелесе пăхнă ăна вĕсем.

— Ну, калаттарас пĕрре!..

Заводиť тума ырaнă аврине — тупайман.

— Мĕнле йапала-ха ку? — тĕлĕннĕ пĕрисем.

— Мĕнле калаттарас?

Шухăшланă хăйсем те, ыйткаланă çынсенчен. Йулашкинчен пĕлнĕ:

— Ара, електропатефон вĕт, електро... Електрицă вăйĕпе калаť ĕнтĕ вăл.

— Ăçтан тупас електрицине?

— Ей, ăна тупасси мĕнех. Халех радио батарейĕпе майлаштаратпăр, — тенĕ пĕрийĕ.

Майлаштарса лартнă радиобатарейĕпе. Анчах патефон шарламан.

— Мĕн тумала-ха? Мĕншĕн каламасť? — тĕлĕннĕ хăйсем.

— Ку батарейăн вăйĕ сахалтарах пулмала. Автомобилĕн вăйлă, йеплерех вăл çутатаť. Давай автомобил моторĕпе çыпăçтаратпăр, — каллех ăс панă пĕр ăсли.

Йалпон хăйĕн автомобил пулман. Часах ыраса тупнă автомобилне те. Тупмасăр — патефон калаттармала-çке. Майлаштарса лартнă, анчах патефон каллех нимĕн те шарламан.

Тĕлĕннĕ пурте. Пурин те çамкийĕсем картланнă.

— Мĕн тумала ĕнтĕ?

— Мĕншĕн каламасť?

— Тĕлĕнмели ним те çук, переменный ток кирлĕ ăна валљи, — хушнă пĕрийĕ.

— Неушлĕ Çĕрпӳвех кайса калаттармала, — аптрарĕç йалпорисем.

— Вăт електропатефон!.. Ахаљ патефон пулнă пулсан...

Патефон лараť халљ, — илекенсем çук.

Çак факт Шĕнер йалповĕнчисем сутă тума пĕлменнине аванах кăтартса параť.

**Шинер.**

# Вулакансен жалăбисем

## Капкăн пичче!

Пирĕн „Париж Коммунĕ“ колхоз (Канаш р.) завхозĕ Назарăв Михаил хăвăртрах сивĕ çанталăк пуласса“ кĕтет. Мĕншĕн тесен вăл тăварсăр „тăварласа“ темиçе катка та хăйар çĕртсе йанă. Çав çĕрнĕ хăйарсене 20-30 градус пулсан шăнса хытса çиме йурăхлă пуласса кĕтет. Сивĕ инçе-çке-ха, тен есĕр, хисеплĕ „Капкăн“, халљтерех сивĕ çанталăк, уйрăмах Назарăв валљи, тупса пама пултаратăр.

**А. Йазыкăв.**

## Хисеплĕ Капкăн тус!

Есĕр 1000 хут та пулин пысăклатса кăтартакан микроскоп тупса пама пултараймăр-ши?

Мĕншĕн тесессĕн пирĕн „Хĕрлĕ хĕвелтухăç“ колхозри (Çĕрпӳ р.) пахалăх комиççин ĕçне ахаљ куçпа темĕнле пăхсан та курма çук. Кăçал уйра кашни тăваткал метăр çинче 20—25 пучах тăккаланă. Çавăн пек микроскоппа пăхсан пахалăх комиççи ĕçне курма пулĕ-ши, тетпĕр.

**Е. Ивановпа Н. Борисăв.**

## Илемлĕ Капкăн!

Кала-ха мана, илемлĕ „Капкăн“, есĕ Хирлеп Пуçĕнчи (Елĕк р.) вулав çурчĕн пуçлăхне курнă-и? Епĕ ăна курманни виçĕ уйăх çитрĕ ĕнтĕ. Курма пулаť-ши ăна ăçта та пулин? Курсан срочнă пĕлтерсен аванччĕ, — епĕр ăна вулав çурчĕ çумнех кăкарса лартас тетпĕр.

**Алексей Кăвик.**

## Капкăн атте!

Сана манăн питĕ пысăк хуйхă пĕлтерес килет. „Мотор“ колхоз (Хĕрлĕ Чутай р.) председателĕ „суккăр“ пулни çинчен. Вăл „суккăр“ куçĕпе колхоз пурлăхĕ çине çителĕклĕ пăхаймасť, Капкăн атте!

Колхозниксем колхозăн йăвăç пахчине хурлăхан 6000 кăк лартса хăварчĕç.

Хурлăхансем вăрман пек çум айĕнче хурлăхлăн лараççĕ, хăрса кайнă. Етем алли унта пырса тĕкĕнмен.

Хурлăхансем хăрса ларнине колхоз преçедателĕ кураймасť-ха. Колхоз председателне, Мытина, „Капкăн“ пуљницине ăсатас тетпĕр, „Капкăн“ емелĕ пит сиплĕ тетчĕç.

**Тĕлменти.**

## Йуратнă Капкăн!

Сысна хĕвеле çултталăкра та виççех кураť, тет. Çавăн пек Карăк-Çырминчи (Вăрмар р.) Кирăв йачĕпе тăракан колхоз правленийĕн пуçлăхĕ Никитин колхозăн сарлака уй-хирĕ çине çулталăкра, виçĕ хут мар, пĕр хут та çавăрăнса пăхайман пулмала. Мĕншĕн тесен уй-хиртен уйри тĕш тырăсене кĕске срукра та пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕртес вăхăтра, кахал йурриле ытларах йурласа вăхăта ирттерчĕ. Темиçе гектар çинче вырса пăрахнă сĕлĕ кĕлтисем шĕвсе выртрĕç. Кĕлтесем хăйсем тĕллĕн çыхăнманшăн Никитин кĕлтесене айăпласа, ответне кĕлтесене тыттарма шутланă пулмала. Апла пулсан, авăн çапасси йапăх пынăшăн та Никитина мар, кĕлтесене ответ тыттармала-ши?

**Варлин.**

# Йапăх фермă пуçлăхĕ




**Сысна:** — Пирĕн фермă ĕçĕсене ура çине тăратас пулсан, чи малтан çак ӳсĕре тăратмала пулĕ.

**Секретарь и вып. редактор *И. ИЛЛАРИОНОВ.*** **За ответ. редактора *Ф. АЛЕКСАНДРОВ***

Сдано в производство 28/IX—36 г. Подписано к печати 16/X—36 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 674. Заказ № 1583

Формат бумаги 58×88 1/16 Об'ем 2,5 п. л. Гор. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Тираж 4400. Изд-газ. «Канаш»

# КУРӐКСЕМ ХУШШИНЧЕ

*Т утарсен „Чайан" журналӗнчен)*

Хӑш-пӗр районсенче ҫилос хатӗрлес ӗҫ кайа тӑрса йулнӑ пирки, курӑк ҫителӗксӗрри ҫине кӑтартма хӑтланаҫ ҫӗ.




— Ахмет, авӑ леш йенне пӑх халӗ, унта ҫилослӑх курӑк курӑнмасть-и? Кунта епӗ мӑй таран путрӑм, нимӗн те курӑнмасть.